ПЕТӖМ ТӖНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПӖРЛЕШӖР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

СОВЕТ СОЮЗӖНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙӖН ЧӐВАШ ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН ТАТА ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

172 (9851) №

1956 ҫулхи августӑн 23-мӗшӗ, кӗҫнерникун

Хакӗ 20 пус
39-мӗш ҫул тухать.

Ҫӗрулми пухса кӗртме лайӑх хатӗрленер

Республикӑри колхозсем, КПСС XX съезчӗн решенийӗсене пурнӑҫласа, кӑҫал ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫ нумайрах туса илес тесе чылай тӑрӑшрӗҫ. Иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, кӑҫал 4,4 пин гектар нумайрах пахча ҫимӗҫпе ҫӗрулми лартнӑ. Вӑрмар, Куславкка, Хӗрлӗ Чутай, Сӗнтӗрвӑрри, Чкаловски, Шӑмӑршӑ, Елчӗк районӗсенчи колхозсем ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫ лартакан лаптӑксене пӗлтӗрхинчен чылай пысӑклатрӗҫ.

Кӑҫал ҫӗрулми тухӑҫлӑ пулать. Вӑрмар районӗнчи «Дружба» колхоз сӗртме пуссине лартнӑ «эпрон» ҫӗрулмине кашни гектартан 180-шар центнер пухса кӗртнӗ, Кувакино районӗнчи «Ленинские заветы» колхозра та сӗртме уйӗнче кӑҫал гектартан 140-шер центнер туса илнӗ.

Ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫе хӑвӑрт, пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртсен тата хатӗрлев, суту-илӳ организацийӗсен ӗҫне лайӑх йӗркелесен республикӑри хуласемпе рабочи поселокӗсенчи ӗҫҫыннисем валли пахча ҫимӗҫпе ҫӗрулми ҫителӗклӗ хатӗрлеме, апат-ҫимӗҫ промышленность предприятийӗсене плана пӑхнӑ чухлӗ тӑратма, обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх валли ҫителӗклӗ таран уйӑрса хума, вӑрлӑх фончӗсене хывма тата колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх нумайрах валеҫме пулать.

Ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫе пухса кӗртме лайӑх хатӗрленесси, вӗсене вӑхӑтра тата тӑкаксӑр пуҫтарса кӗртесси питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫ пулса тӑрать. Калас пулать, республикӑри чылай колхозсемпе МТС-сенче ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫе пухса кӗртме начар хатӗрленеҫҫӗ-ха, ир пулакан сортсене пухса кӗртме вӑхӑт ҫитнӗ пулсан та вӗсене пухса кӗртме тытӑнмаҫҫӗ. Иртнӗ ҫулсенче ҫӗрулми кӑларас ӗҫе вӑраха хӑварса нумай колхозсем пысӑк йӑнӑш тунӑ. Пӗлтӗр хӑшпӗр колхозсенче юр ҫума тытӑничченех ҫӗрулми кӑларнӑ. Йӗпе-сапа ҫанталӑкра тата тирпейсӗр ӗҫленине пула уйрӑм колхозсем кашни гектар пуҫне 30—40-шер центнер ҫӗрулми сухатнӑ. Партипе совет организацийӗсен, МТС дирекцийӗсен, колхоз председателӗсен ҫав йӑнӑшсенчен тивӗҫлӗ вывод тумалла. Мӗнпур лаптӑк ҫинчи ҫӗрулмине пӗр килограмм юлмиччен пухса кӗртме халех хатӗрленсе ҫитмелле.

Республикӑри МТС-сенче ҫӗрулми пухса кӗртмелли машинӑсем сахал мар. Ҫӗрулми кӑларса пухмалли комбайнсемпе ытти машинӑсене сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех юсаса ҫитермелле, ҫав техникӑпа ӗҫлеме ҫынсем халех ҫирӗплетсе хумалла. МТС дирекцийӗсен ҫӗрулми кӑларнӑ ҫӗрте ӗҫлекен механизаторсем валли куллен тата сезонри заданисене палӑртмалла. Ҫӗрулми кӑларнӑ вӑхӑтра МТС-ӑн пӗр машини те, пӗр механизатор та ӗҫсӗр ан тӑтӑр.

Колхоз председателӗсемпе уй-хир бригадирӗсен МТС техники ҫине ҫеҫ шанса лармалла мар. Ҫӗрулми кӑларас ӗҫре МТС машинисемпе усӑ курнипе пӗрлех колхозсен ӑна плугсемпе, сухапуҫсемпе тата ытти ӗҫ хатӗрӗсемпе кӑларма тӑрӑшмалла, ӗҫ вӑйӗ ҫитнӗ ҫӗрте алӑ вӗҫҫӗн кӑларассине те организацилемелле. Тӑкаксене сахаллатас шутпа ҫӗрулми кӑларнӑ лаптӑка тепӗр хут сӳрелесе тата сухаласа тухмалла, тупӑннӑ ҫӗрулмине пуҫтарса илме тӑрӑшмалла. Кирек хӑш колхозра та ҫӗрулмине 10—12 кун хушшинче пухса кӗртмелле тӑвас пулать.

Ҫӗрулми кӑларма тухиччен пур колхозсемпе МТС-сенче те ӗҫ планӗсем туса хатӗрлес пулать. Ҫав плансенче ҫӗрулми кӑларас ӗҫе ялти мӗнпур ҫынсене явӑҫтарма палӑртмалла. Иртнӗ ҫулсенче ҫӗрулми кӑларнӑ ҫӗрте ӗҫленӗ колхозниксене ӗҫшӗн тӗрӗс мар тӳленӗ тӗслӗхсем те пулнӑ. Кам мӗнле ӗҫленине шута илменни, пурне те пӗр пек тӳлени мӗнпур ӗҫе пӑсса хума ҫеҫ пултарать. Ҫавӑнпа та кашни колхозника мӗнпур ҫӗрулмине пухса кӗртиччен уйрӑм участок ҫирӗплетсе памалла, ӗҫкунӗ ҫӗрулми мӗн чухлӗ пухса кӗртнине кура памалла. Партипе правительство ҫӗрулмие хӑвӑртрах пухса кӗртме хавхалантарас тесе, колхоз правленийӗсене ӗҫшӗн хушса тӳлемелли йӗрке тӑрӑх пухса кӗртнӗ ҫӗрулмин 10 процентне кашни кунах ӗҫре пулнӑ колхозниксене пама сӗннӗ. Ҫак сӗнӗве пурнӑҫа кӗртни ҫӗрулми пухса кӗртес ӗҫе чылай хӑвӑртлатма пулӑшнӗ.

Кашни колхозрах ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫ пухса кӗртме тытӑннӑ малтанхи кунсенчен пуҫласах ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫе государствӑна пама тытӑнмалла. Хӑшпӗр колхозсем кӑҫалхи ҫӗрулмине государствӑна панӑ та ӗнтӗ. Ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫ хатӗрлес ӗҫре пӗлтӗр пирӗн республикӑра пысӑк ҫитменлӗхсем пулнӑ. Иртнӗ ҫул нумай районсен руководителӗсем ҫак ӗҫе конкретлӑ, оперативлӑ ертсе пыман, хатӗрлев ӗҫӗ хӑй тӗллӗн пулса пырасса шанса тӑнӑ, ҫавна пула государство заданийӗсене вӑхӑтра пурнӑҫлайман. Хатӗрлев организацийӗсем, уйрӑмах Чӑвашпотребсоюз, ҫӗрулми илессине чӑтма ҫук начар организациленӗ пулнӑ. Калас пулать, ҫав йӑнӑшсем кӑҫал каллех палӑрма пуҫларӗҫ. Пахча ҫимӗҫ, ир пулакан ҫӗрулми хатӗрлеме вӑхӑт ҫитнӗ пулсан та ҫак ӗҫе тытӑнманни пӗрех. Августӑн 15-мӗшӗ тӗлне пахча ҫимӗҫ хатӗрлемелли плана республика 5 процент ҫеҫ тултарнӑ. Уйрӑмах хӑяр, помидор, кӑшман, кишӗр, сухан хатӗрлес ӗҫ япӑх пырать. Чылай колхозсем пухса кӗртнӗ пахча ҫимӗҫе вӑхӑтра хатӗрлев пункчӗсене леҫмеҫҫӗ. Сӗнтӗрвӑрри, Шупашкар, Канаш тата ытти хӑшпӗр районсенчи уйрӑм колхозсем государствӑна ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫ памалли плана тултармасӑрах вӗсене колхоз пасарӗсенче сутма тытӑннӑ.

Суту-илӳ тата хатӗрлев организацийӗсем кӑҫал та ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫ илме начар хатӗрленеҫҫӗ. Чӑвашпотребсоюзӑн 1956 ҫулта 1.750 тонна ҫӗрулми хумалӑх хранилищӗсем, 200 тонна сухан усрамалӑх хранилище тумалла, пахча ҫимӗҫ тӑварламалли тата йӳҫӗтмелли 5 пункт уҫмалла, Канаш хулинче механизациленӗ хатӗрлев пунктне ӗҫе ямалла. Паянхи куна Чӑвашпотребсоюз ҫӗрулми хранилищисем тумалли плана 37 процент кӑна тултарнӑ, пӗр пункт ҫеҫ уҫнӑ. Чӑваш АССР Суту-илӳ министерстви те ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫ хатӗрлес ӗҫ ҫине сӳрӗккӗн пӑхать. Суту-илӳ организацийӗсем ҫак ӗҫре ответлӑх туйманнине пулах ӗнтӗ пирӗн хуласемпе рабочи поселокӗсенче хӗллехи тата ҫуллахи вӑхӑтра магазинсемпе лавккасенче ҫав ҫимӗҫсене туянса илме ҫук. Чӑвашпотребсоюз правленийӗн председателӗнчен Харитонов юлташран тата суту-илӳ министрӗнчен Гавриков юлташран ҫапла ыйтма вӑхӑт ӗнтӗ: хӑҫан вӗсем пахча ҫимӗҫ тата ҫӗрулми сутас ӗҫе халӑх ыйтнӑ пек йӗркелеме шутлаҫҫӗ. Халӑха сӑмахпа тивӗҫлӗ пулни ҫителӗксӗр, ӗҫпе тивӗҫлӗ пулмалла.

Государство умӗнчи обязательствӑсене пурнӑҫланӑ вӑхӑтрах колхозсенче ҫитес ҫураки валли ҫӗрулми вӑрлӑхӗ ҫителӗклӗ таран хывса хӑварас пулать. Хуҫалӑхра усӑ курма тата вӑрлӑхлӑх хӑварнӑ ҫӗрулмине усрама халлӗхе колхозсен хранилищӗсем ҫитмеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ҫӗрулмине траншейӑсемпе буртӑсенче хӗл каҫарма тивет. Ҫӗрулми хунӑ траншейӑсемпе буртӑсене малтанхи кунсенчен пуҫласах тӗрӗс витсе хӑвармалла, хӗллехи вӑхӑтра асӑрхаса тӑмалла. Ҫӗрулми тата пахча ҫимӗҫ ҫӗрсе кайни нихӑш колхозра та ан пултӑр.

Ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫ пухса кӗртесси тата вӗсене хатӗрлесси — ответлӑ ӗҫ. Ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫе вӑхӑтра тата пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртер, ҫак продуктсене туса илессине тата хатӗрлессине ӳстересси ҫинчен КПСС Центральнӑй Комитечӗпе СССР Министрӗсен Совечӗ кӑҫалхи январь уйӑхӗнче йышӑннӑ постановление чыслӑн пурнӑҫлар.

К. Е. Ворошилов Хельсинкире

ХЕЛЬСИНКИ, августӑн 21-мӗшӗ. **(ТАСС спецкорӗ).** Паян СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилов Финлянди Республикин Президенчӗ У. К. Кекконен патӗнче, унтан Финлянди Республикин Президенчӗ пулнӑ Ю. К. Паасикиви, ҫавӑн пекех премьер-министр К. А. Фагерхольм патӗнче пулнӑ.

Сума суса ответлес йӗркепе СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилов патӗнче Ю. К. Паасикивипе К. А. Фагерхольм пулнӑ.

* * *

ХЕЛЬСИНКИ, августӑн 21-мӗшӗ. **(ТАСС спецкорӗ).** Паян каҫхине Финлянди Республикин Президенчӗ У. К. Кекконен хӑйӗн дворецӗнче СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председательне К. Е. Ворошилова чысласа чаплӑ апатлану ирттернӗ.

Апатлану ҫав тери ӑшӑ кӑмӑллӑн иртнӗ.

Апатланура Финлянди Республикин Президенчӗ У. К. Кекконенпа СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилов сӑмахсем тухса каланӑ.

Пахча ҫимӗҫ пӑхса ӳстерес ӗҫ опычӗпе паллашма пухнӑ канашлу

Августӑн 21-мӗшӗнче Мускавра пысӑк тухӑҫлӑ пахча ҫимӗҫ пӑхса ӳстерес ӗҫ опычӗпе паллашма пухнӑ канашлу уҫӑлнӑ. Ӑна Китай Халӑх Республикин тата Европӑри халӑх демократи ҫӗршывӗсен представителӗсемпе пӗрле ирттереҫҫӗ. Канашлӑва СССР Ялхуҫалӑх министрӗн пӗрремӗш заместителӗ И. С. Волченко уҫнӑ.

Канашлӑва мӗнпур союзлӑ республикӑсен представителӗсем, ученӑйсем тата ялхуҫалӑх специалисчӗсем, аслӑ шкулсен работникӗсем, ҫавӑн пекех малта пыракан чылай колхозсен, МТС-сен тата совхозсен руководителӗсем хутшӑннӑ.

Ирхи ларура СССР Ялхуҫалӑх министрӗн заместителӗ А. М. Левицкий доклад туса панӑ. Вӑл канашлу участникӗсене пирӗн ҫӗршывра пахча ҫимӗҫ акса тӑвас ӗҫ малалла аталанса пыни ҫинчен каласа панӑ.

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилов Финляндие пырса ҫитни

ХЕЛЬСИНКИ, августӑн 21-мӗшӗ. **(ТАСС спецкорӗ).** Финлянди Республикин Президенчӗ У. К. Кекконен чӗннипе паян СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилов тата унпа пӗрле пынӑ ҫынсем — СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Секретарӗ А. Ф. Горкин, СССР Культура министрӗ Н. А. Михайлов, Хут тата йывӑҫран тӗрлӗ япаласем тӑвакан промышленность министрӗ Ф. Д. Варакин Хельсинкие пырса ҫитнӗ.

Чикӗри Вайниккала станцийӗнче К. Е. Ворошилова тата унпа пӗрле пынӑ ҫынсене ССР Союзӗн Финляндири Посолӗ В. З. Лебедев, Финлянди Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин статс-секретарӗ Р. Сеппяля, ҫавӑн пекех генерал-лейтенант Ф. Хельминен, профессор Э. Вегелиус тата ыттисем кӗтсе илнӗ те Хельсинки хулине ҫитиччен пӗрле кайнӑ.

К. Е. Ворошиловӑн специальнӑй поездӗ Хельсинки хулинчи главнӑй вокзала пырса ҫитнӗ. Вокзала Финлянди Республикипе Совет Союзӗн государство ялавӗсемпе илемлетнӗ. Унта хисеплӗ хурал тӑратнӑ.

Совет Союзӗнчен пынӑ хисеплӗ хӑнана кӗтсе илме Финлянди Республикин Президенчӗ У. К. Кекконен, сейм председателӗ В. И. Суксилайнен, премьер-министр К. А. Фагерхольм, ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Р. Тернгрен тата Финлянди правительствин ытти членӗсемпе официальнӑй ҫынсем пынӑ.

К. Е. Ворошилова Совет Союзӗн Финляндири посольствипе суту-илӳ представительствин сотрудникӗсем, Совет Союзӗнчи, Финляндири тата урӑх ҫӗршывсенчи хаҫат-журналсен представителӗсем кӗтсе илнӗ.

Вырӑнти вӑхӑтпа 17 сехетре специальнӑй поезд вокзал перронӗ умне ҫитсе тӑрать. К. Е. Ворошилов тата унпа пӗрле пынӑ ҫынсем вагонран тухаҫҫӗ. Ҫар оркестрӗ Совет Союзӗн гимнне калать. К. Е. Ворошилов Финлянди Республикин Президентне У. К. Кекконена ӑшӑ кӑмӑлпа алӑ парать.

Хельсинки хули муниципалитечӗн председателӗ Л. Ахо К. Е. Ворошилова саламласа сӑмах каланӑ.

Микрофон патне СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилов пырать. Вӑл ҫапла калать:

Хисеплӗ Президент господин!

Хисеплӗ господин — Хельсинки хулин мэрӗ!

Хельсинки хулин гражданӗсем!

Тусла Финлянди столицине килсе ҫитнӗ май эпӗ Финлянди халӑхне тата Сире, Президент господин, совет халӑхӗ ячӗпе тата хам ятӑмпа чӗререн салам калатӑп.

Ӗҫе юратакан, талантлӑ Финлянди халӑхӗн пурнӑҫӗпе паллашма май пурри мана тата мана пӗрле килнӗ ҫынсене питӗ савӑнтарать. Эпир ҫакӑнта килни пирӗн ырӑ кӳршӗсем пулса пурӑнакан ҫӗршывсем хушшинчи лайӑх ҫыхӑнусене малалла ҫирӗплетмешкӗн пире Финлянди Республикин государство деятелӗсемпе тытакан ҫыхӑнусене вӑйлатма май парӗ. Ҫакӑншӑн эпир пурсӑмӑр та хавас.

Пирӗн икӗ ҫӗршыв интересӗсемшӗн, пӗтӗм тӗнчери мирпе хӑрушсӑрлӑх интересӗсемшӗн юлашки ҫулсенче пирӗн чӑн-чӑн ырӑ кӳршӗлле ҫыхӑнусем ҫав тери ӑнӑҫлӑ аталанса пыраҫҫӗ. Ҫак ҫыхӑнусене совет халӑхӗ пысӑка хурса хаклать тата хисеплет.

Саламлӑ сӑмахсем каланӑ хыҫҫӑн СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошиловпа Финлянди Республикин Президенчӗ У. К. Кекконен хисеплӗ хурал фрончӗ умӗпе утса тухаҫҫӗ.

Президент валли сарса хунӑ хӗрлӗ кавир тӑрӑх СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗпе Финлянди Республикин Президенчӗ вокзал патӗнчи площаде тухаҫҫӗ. Унта вӗсене Финлянди столицинчи нумай пин ҫынсем саламлӑ сӑмахсем каласа кӗтсе илеҫҫӗ. Нумайӑшӗн аллисенче Финляндипе Совет Союзӗн ялавӗсем. Вӗсене ҫӳле ҫӗкленӗ. Совет Союзӗнчен пынӑ хӑнасем вокзалтан Президент дворецне кайнӑ вӑхӑтра вӗсене ҫул тӑршшӗпех тӑрса тухнӑ Хельсинки ҫыннисем ӑшшӑн саламланӑ. Двореца пырса ҫитнӗ хыҫҫӑн К. Е. Ворошиловпа У. К. Кекконен балкон ҫине тухаҫҫӗ. Пухӑннӑ халӑх вӗсене чыслаха тӑвӑллӑн алӑ ҫупать.

Львовпа Волынь районӗнчи ҫӗр кӑмрӑк бассейнӗнчи горняксен канашлӑвӗ

НОВОВОЛЫНСК (Волынь облаҫӗ), августӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Юлашки вӑхӑтра Волыньпе Львов облаҫӗсен районӗсенче ҫӗр кӑмрӑкӗ кӑларас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем пуҫланнӑ. Унта халех ӗнтӗ тӑватӑ шахтӑра ҫӗр кӑмрӑкӗ кӑлараҫҫӗ, татах темиҫе предприяти тӑваҫҫӗ.

Паян унта, ҫӗр кӑмрӑк кӑлармалли ҫӗнӗ бассейн центрне, КПСС Центральнӑй Комитечӗн пӗрремӗш секретарӗ Н. С. Хрущев юлташпа Украинӑри Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн пӗрремӗш секретарӗ А. И. Кириченко юлташ пырса ҫитнӗ. Вӗсем ҫӗр кӑмрӑк кӑларас ӗҫ мӗнле пынипе паллашнӑ, Хӗвеланӑҫ Украина кочагерни малашне мӗнле аталанасси ҫинчен ыйтса пӗлнӗ, халӗ тӑвакан 7-мӗш номерлӗ «Нововолынская» шахтипе 2-мӗш номерлӗ «Нововолынская» шахтинче пулнӑ. Н. С. Хрущевпа А. И. Кириченко юлташсем шахта тӑвакансемпе, ҫӗр кӑмрӑк кӑларакансемпе калаҫнӑ, вӗсен ӗҫ условийӗсемпе, ҫӗнӗ строительство техникипе, шахтӑсем тӑвас, ҫӗр кӑмрӑкӗ кӑларас ӗҫ техникипе паллашнӑ, ҫӗнӗ стройкӑсене, шахтерсем пурӑнакан Нововолынск хулине пӑхса ҫӳренӗ.

Унтан Н. С. Хрущевпа А. И. Кириченко юлташсем, СССР Ҫӗр кӑмрӑк промышленность министрӗ А. Н. Задемидко юлташ, СССР Ҫӗр кӑмрӑк промышленность предприятийӗсем тӑвакан строительство министрӗ Л. Г. Мельников, Украина ССР Министрӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗ П. А. Розенко юлташ, Украина ССР Ҫӗр кӑмрӑк промышленность министрӗ А. Ф. Засядько юлташ, Украина ССР Ҫӗр кӑмрӑк промышленность предприятийӗсем тӑвакан строительство министрӗ Г. В. Красниковский юлташ, партин Волынь обкомӗн секретарӗ И. С. Грушецкий юлташ, Львов обкомӗн секретарӗ М. К. Лазуренко юлташ «Нововолынскуголь» трестпа «Укрзападшахтострой» комбинатӑн ҫӗр кӑмрӑк шахтисенче ӗҫлекен горняксен, руководителӗсен тата инженерла-техникӑлла работникӗсен канашлӑвне хутшӑннӑ.

Канашлу Нововолынскри шахтӑсен ӗҫне лайӑхлатасси ҫинчен тӑракан ыйтӑва, плана тултарас тата ҫӗнӗ бассейнри ҫӗр кӑмрӑк промышленноҫне малалла аталантарас тӗлӗшпе мӗн-мӗн тумалли ҫинчен сӳтсе явнӑ. Канашлура шахтӑсен начальникӗсем А. Ф. Нечаевпа Н. С. Холод, 4-мӗш номерлӗ шахтӑн главнӑй инженерӗ Ш. И. Дмитриев, 1-мӗш номерлӗ шахтӑн пӗрремӗш участокӗн начальникӗ А. С. Поляновский, ҫӗнӗрен тӑвакан предприятисен директорӗ А. И. Никифоров тата ыттисем сӑмах тухса каланӑ, ҫӗнӗ техникине ӗҫе кӗртсе пыни, унпа лайӑхрах усӑ курасси ҫинчен, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстересси, ҫӗр кӑмрӑкӗн хӑйне ларакан хакне йӳнетесси ҫинчен, ӗҫе организацилессине тата ӗҫ укҫи тӳлессине йӗркелесси ҫинчен, горняксемпе строительсен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатасси ҫинчен каланӑ.

Канашлура КПСС Центральнӑй Комитечӗн пӗрремӗш секретарӗ Н. С. Хрущев юлташ сӑмах тухса каланӑ.

Кун вӗҫленнӗ тӗле поселокра тин кӑна туса пӗтернӗ «Шахтер» стадиона горняксем, строительсем, инженерсем, служащисем, Нововолынскра пурӑнакансем, сывӑхри ялсенчи колхозниксем 25 пин ҫын ытла пухӑннӑ. Унта митинг пулнӑ.

Н. С. Хрущев, А. И. Кириченко юлташсем трибуна ҫине хӑпараҫҫӗ. Вӗсене пурте ӑшшӑн саламласа кӗтсе илеҫҫӗ.

Митинга партин Иваничи райкомӗн секретарӗ С. В. Наконечный юлташ уҫнӑ.

Партин Волынь обкомӗн секретарӗ Грушецкий юлташ митингра ҫапла каланӑ: Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тӑрӑшнипе Советлӑ Волынь кая юлнӑ облаҫран вӑйлӑ аталаннӑ промышленноҫлӑ, лайӑх механизациленӗ ялхуҫалӑхлӗ область пулса тӑрать. Горняксен ячӗпе вӑл КПСС Центральнӑй Комитетне ҫапла шантарса каланӑ: ҫӗнӗ бассейнри шахтерсем халӑх хуҫалӑхӗ валли ҫӗршыва ҫӗр кӑмрӑкӗ нумайрах парас тесе, мӗн кирлине пӗтӗмпех тӑвӗҫ.

Унтан 2-мӗш номерлӗ «Нововолынская» шахтин начальникӗ А. Ф. Нечаев юлташ тухса калать. Вӑл КПСС XX съезчӗн решенийӗсене пурнӑҫласа, шахта коллективӗ 7 уйӑхри планран ирттерсе 3.500 тонна ҫӗр кӑмрӑкӗ кӑларни ҫинчен, ҫӗр кӑмрӑкӗн хӑйне ларакан хакне йӳнетни, 111 пин тенкӗ перекетлени ҫинчен каласа парать.

6-мӗш номерлӗ шахтӑра ӗҫлекен проходчиксен бригадирӗ Т. М. Веренко юлташ хӑйсен тӑван крайӗн сӑн-сӑпачӗ улшӑнса пыни ҫинчен каласа парать. Вӑл хӑйсен цехӗнчи горняксем вӑй-хала шеллемесӗр тӑрӑшса ӗҫлени ҫинчен, вӗсем июль уйӑхӗнче заданирен ирттерсе виҫӗ хут нумайрах ӗҫ туни ҫинчен калать.

Иваничи районӗнчи «Чекист» колхоз председателӗ П. Н. Оленюк юлташ митинг участникӗсене хӗрӳллӗн саламланӑ, хӑйсен ялхуҫалӑх артелӗнчи ӗҫҫыннисен ҫитӗнӳӗсем ҫинчен, вӗсем кӑҫал сӗт суса илессине, аш-какай туса илессине икӗ хут ӳстерни, вӑйлӑ тырпулпа техникӑлла культурӑсем пӑхса ҫитӗнтерни ҫинчен каласа панӑ.

Митингра КПСС Центральнӑй Комитечӗн пӗрремӗш секретарӗ Н. С. Хрущев юлташ тухса каланӑ. Вӑл сӑмах каланӑ вӑхӑтра халӑх темиҫе хутчен тӑвӑллӑн алӑ ҫупнӑ. КПСС Центральнӑй Комитечӗ ячӗпе Н. С. Хрущев юлташ ҫӗнелнӗ Волынь ҫӗрӗ ҫинчи рабочисене, инженерсене, служащисене, колхозниксене саламланӑ, хамӑрӑн аслӑ социализмлӑ Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума ырӑ суннӑ.

КПСС райкомӗсемпе райисполкомсем тӑратнӑ тӑрӑх, тӗштырӑ культурисем пухса кӗртнӗ, государствӑна тырӑ памалли плана тултарнӑ тата хӑйсем валли кӗрхи тырӑ вӑрлӑхӗ хывса ҫитернӗ ҫак колхозсене республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ

СОВЕТСКИ РАЙОНӖ ТӐРӐХ

4. **Молотов ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **А. Г. Гаврилов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Е. И. Ильин** юлташ).

5. **Свердлов ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **П. Ф. Федоров** юлташ, парторганизаци секретарӗ **В. Т. Тимофеев** юлташ).

6. **Маленков ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **С. С. Каратаев** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Г. Д. Денисов** юлташ).

7. **Суворов ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **Н. С. Логинов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **М. Н. Никитин** юлташ).

ЧУРАЧӐК РАЙОНӖ ТӐРӐХ

8. **«Прожектор» колхоз** (председателӗ **М. М. Максимов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **К. М. Максимов** юлташ).

9. **Калинин ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **А. Г. Гурьев** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Ф. Е. Еремеев** юлташ).

10. **«Родина» колхоз** (председателӗ **Л. В. Васильев** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Т. А. Артемьева** юлташ).

11. **Шуркасси ял Советӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **Ф. С. Семенов** юлташ, пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ **П. Г. Герасимов** юлташ).

ВӐРНАР РАЙОНӖ ТӐРӐХ

12. **Ҫӗрпел ял Советӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **М. Н. Кузьмин** юлташ, парторганизаци секретарӗ **А. С. Ластухин** юлташ).

КРАСНОАРМЕЙСКИ РАЙОНӖ ТӐРӐХ

13. **«Гигант» колхоз** (председателӗ **А. Н. Никифоров** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Ф. С. Степанов** юлташ).

14. **«Путь Ленина» колхоз** (председателӗ **А. С. Зорин** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Г. И. Илларионов** юлташ).

15. **Сталин ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **М. Е. Волков** юлташ, парторганизаци секретарӗ **П. В. Васильев** юлташ).

16. **«Байсубино» колхоз** (председателӗ **Н. А. Алексеев** юлташ, парторганизаци секретарӗ **П. М. Максимов** юлташ).

17. **Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **И. Я. Яковлев** юлташ, парторганизаци секретарӗ **А. М. Митрофанов** юлташ).

18. **«Стахановец» колхоз** (председателӗ **Е. Г. Скворцов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **П. И. Иванов** юлташ).

19. **Ленин ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **А. В. Киселев** юлташ, парторганизаци секретарӗ **А. П. Петров** юлташ).

20. **«Пятилетка» колхоз** (председателӗ **А. М. Михайлов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Е. П. Герасимов** юлташ).

21. **«Красная Шатьма» колхоз** (председателӗ **Л. Д. Львов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Ф. А. Андреев** юлташ).

22. **«Сталинец» колхоз** (председателӗ **Е. Л. Лунин** юлташ, парторганизаци секретарӗ **П. Г. Григорьев** юлташ).

23. **Коминтерн ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **С. И. Иванов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **В. И. Иванов** юлташ).

24. **«Герой» колхоз** (председателӗ **Н. П. Харитонов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Ф. П. Павлов** юлташ).

25. **«Красное Сормово» колхоз** (председателӗ **И. Т. Терентьев** юлташ, парторганизаци секретарӗ **А. А. Андреев** юлташ).

Коммунистсем малти ретре

Кувакино районӗнчи колхозниксемпе механизаторсем тырпула хӑвӑртрах пухса кӗртессишӗн тата государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарассишӗн социализмла ӑмӑртӑва хутшӑнса, сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне тырӑ памалли плана тултарма обязательство йышӑнчӗҫ. Ял ӗҫченӗсем тырпул пухса кӗртме тухсан малтанхи кунсенчен пуҫласах хӑйсен сӑмахне чыслӑн пурнӑҫлассишӗн ырми-канми тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Хӗрӳ ӗҫсем пуҫланас умӗн кашни колхозрах артель членӗсен пухӑвӗсенче государствӑна тырӑ памалли ҫирӗп графиксем туса хатӗрленӗ, транспорт бригадисем йӗркеленӗ, унта ӗҫлеме чи хастар, пултаруллӑ колхозниксене ҫирӗплетнӗ.

Машина-трактор станцийӗсемпе колхозсенчи пуҫламӑш парторганизацисем ялхуҫалӑх ӗҫченӗсем хушшинчи организаторла ӗҫе вӑйлатрӗҫ, массӑлла-политикӑлла ӗҫе конкретлӑ задачӑсемпе тачча ҫыхӑнтарса туса пычӗҫ. Комбайн агрегачӗсемпе уй-хир бригадисенче ӑнлантару ӗҫне туса пыма коммунистсемпе партире тӑман активистсенчен агитаторсем ҫирӗплетнӗ. Чылай агитаторсем хӑйсен хисеплӗ ӗҫне лайӑх туса пыраҫҫӗ. Уй-хирте тата итемсем ҫинче вӗсем кашни ҫынна умра тӑракан чылай тивӗҫе срокчен пурнӑҫлама, ҫӗнӗ ӳсӗмсем тума хавхалантараҫҫӗ.

«Новь», «Путь Ильича» тата Сталин ячӗпе тӑракан колхозсенчи парторганизаци секретарӗсем Н. Рогов, П. Головин тата Н. Пчеляков юлташсем хӗрӳ ӗҫ вӑхӑтӗнче кашни кунах уйра, колхозниксемпе механизаторсем патӗнче пулчӗҫ, витӗмлӗ сӑмахпа тата ӗҫри ырӑ тӗслӗхпе ыттисене тӑрӑшса ӗҫлеме хавхалантарса пычӗҫ.

Агитацилле-массӑлла ӗҫе М. Ларин, М. Воронин, Н. Ваганов тата ытти чылай юлташсем лайӑх туса пыраҫҫӗ. Киров ячӗпе тӑракан колхозри уй-хир бригадирӗ Л. Гусев коммунистӑн ӗҫне уйрӑмах палӑртмалла. Вӑл халиччен юлса пынӑ бригадӑна кӗске хушӑрах малти вырӑна кӑларма пултарчӗ.

Ӗҫре Н. Горшков, М. Куклев, П. Федотов коммунистсем пахха тӗслӗх кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем комбайнпа 350-шар гектар ҫинчи тӗштырӑсене пухса ҫапрӗҫ.

Колхозсенче комбайнсем ҫапакан тырра итемсем ҫине турттарса тасатассине лайӑх йӗркеленӗ. Тырӑ комбайн бункерӗнчен тӳрех итем ҫине пырать, унта ӑна сортласа тасатаҫҫӗ те, государствӑн хатӗрлев пунктне е колхоз складне ӑсатаҫҫӗ. Сӑмахран, «Путь Ильича», «Новь» тата Киров ячӗпе тӑракан колхозсенче итем ҫинче пӗр центнер тырӑ та юлмасть. Колхозниксем мӗнпур тырра ҫав кунах тасатса складсене хываҫҫӗ.

Парторганизацисем социализмла ӑмӑртӑва конкретлӑ ертсе пыма, ӑна анлӑн сарса яма тӑрӑшаҫҫӗ. Тырпул пухса кӗртес тата государствӑна тырӑ парас ӗҫре малта пыракансен ячӗсене кашни кунах кӑтарту хӑмисем ҫине ҫыраҫҫӗ, вӗсене куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавсем параҫҫӗ. Малта пыракансен опычӗпе стена хаҫачӗсем, боевой листоксем тата ӑмӑрту бюллетенӗсем урлӑ сутатассине лайӑх йӗркеленӗ.

Тырпул пухса кӗртес ӗҫе ӑнӑҫлӑ туса ирттерме кӑҫал ҫӑмӑлах мар. Час-часах ҫумӑр ҫуса тӑчӗ. Ҫавӑнпа та комбайнсен тата автомашинӑсен хӑшпӗр чухне чарӑнса тӑма тиврӗ. Апла пулин те колхозниксемпе механизаторсем хӑйсен сӑмахне ҫирӗп пурнӑҫларӗҫ. Район государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарчӗ, колхозсем халӗ закуп шучӗпе тырӑ сутма тытӑнчӗҫ.

Пирӗн ӗҫре ҫитменлӗхсем те пур. Кувакино районӗ юлашки кунсенче тырпул пухса кӗртес хӑвӑртлӑха чакарчӗ. Ҫак кунсенче МТС-сенче тата колхозсенче парти пухӑвӗсем ирттерчӗ, коммунистсем КПСС XX съезчӗн решенийӗсене пурнӑҫласси ҫинчен сӳтсе яврӗ. Ҫав пухусенче коммунистсем уй-хир ӗҫӗсене хӑвӑртлатас енӗпе конкретлӑ сӗнӳсем пачӗҫ. Халӗ колхозсем тырпул пухса кӗртес ӗҫе хӑвӑртлатрӗҫ.

Районти колхозниксемпе механизаторсем ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлассишӗн ӑмӑртӑва татах вӑйлатрӗҫ. Вӗсем ҫак кунсенчех мӗнпур тырпула пухса кӗртме, кӗрхи тырӑсем акса пӗтерме тӑрӑшаҫҫӗ.

Р. АВАНСКИЙ,
КПСС райкомӗн Сурмайкан МТС-ӗ енӗпе ӗҫлекен секретарӗ.

Уполномоченнăйсем çине шанса ларнипе...

Сахарпуçĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал анса пулнă тырпула пухса кĕртме хастаррăн тытăннăччĕ. Кунта кашни колхозника уйрăм участоксем валеçсе панă май, малтанхи вăхăтра ĕçсем йĕркеллĕ пулса пычĕç. 397 гектар çинчи ыраша кĕске срокра тата тăккаламасăр вырса пухнă. Колхозниксем ĕçленĕ çĕрте час-часах агитаторсене курма пулатчĕ, кашни бригадăрах боевой листоксем тухса тăнă. Малтанхи вăхăтра тырпул пухса кĕртес ĕçре колхоз районта малти вырăнсенчен пĕрне йышăннă. Артель правленийĕпе пуçламăш парторганизаци пирвайхи çитĕнÿсемпе лăпланнă, халĕ колхоз ĕçри хăвăртлăха чакарнăçемĕн чакарса пырать. Ыраш вырнă чухнехи хăвăртлăхпах ĕçленĕ пулсан, çуртрисене август уйăхĕн малтанхи икĕ эрнинчех вырса пĕтерме май пурччĕ. Чăннипе вара ăна виçĕ эрне ытла вырнă пулин те, пухса кĕртмелли тырпул тата 150 гектар ытла юлнă.

Юлашки вăхăтра уй-хирти ĕçсем нумайланчĕç. Çакă вăл ĕç вăййĕпе, техникăна туллин усă курма тата уй-хир ĕçĕсене оперативлă ертсе пыма, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма хушать. Анчах ĕçе оперативлă ертсе пырас вырăнне кунти руководительсем çухалса кайнă, уй-хир ĕçĕсене черетпе туса пырас системăна йăлана пăханнă. Ыраш вырса пĕтернĕренпе тăваттăмĕш эрне çине кайнă пулсан та ыраш кĕлтисене капана хывса пĕтермен. Авăн çапма та кая юлса пуçăннă. Çакă тепĕр йывăрлăх патне илсе çитернĕ: вăрлăх хатĕр маррине пула колхоз кĕрхи тырăсем акма вăхăтра тытăнайман. Сăмах майĕн каласан, кĕраки те ăнăçлă пулса пырать теме çук. Колхоз руководителĕсем шутланă тăрăх, ыраша августăн юлашки кунĕсенче кăна акса пĕтермелле иккен.

Комбайнсем патне кайнă чухне, çул хĕрринчи çырмара, колхозницăсен пысăк ушкăнĕ утă çулнине куртăмăр. Çак тĕлĕнмелле тĕслĕхрен комбайн патĕнчен тырă турттаракан хĕрсем çапла шÿтлесе кулаççĕ.

— Утти тырă мар, тăкăнмасть терĕç пулмалла та...

Эпир çитнĕ чухне С. Павлов комбайнер агрегачĕ сĕлĕ пуссинче ларать.

— Мĕн те пулин çĕмĕрĕлчĕ-им?—ыйтрăмăр комбайнертан.

— Машини юсавлах-ха, бункерти тырра ниçта хума аптратăн, михĕсем çитмеççĕ.

Михĕсем çитмеççĕ кăна мар, артель правленийĕ çапнă тырра итем çине турттарма та çителĕклĕ тарăн лавсем, машинăсем уйăрман. Çав вăхăтрах артель председателĕ И. Маслов юлташ ниме тума лавсем парать. Комбайн патĕнче ĕçлеме çынсем тата тырă турттарма лавсем пулманнипе С. Павлов комбайнер I-мĕш бригада хирĕнчен ĕçлемесĕрех кунта тухса килнĕ. Анчах ку бригадăра та çавăн пек кăлтăксемех тухса-тухса тăнă Агрегат çинче ĕçлекенсем валли вĕри апатпа ĕçмелли таса шыв та вăхăтра илсе килмеççĕ.

Бункертан халĕ пушатнă тырра машинăпа итем çине илсе кайрĕç.

— Эсир тепре киличчен манăн ахалех ларма пулать ĕнтĕ, ĕнерхи пек çĕр çинех тăкмалла ан пултăрччĕ,—тесе юлчĕç комбайнерпа унăн помощникĕ.

В. Петров комбайнер ĕçлекен уйра та çапнă тырра турттарса ĕлкĕреймеççĕ — халлех лавсем çук. Комбайнер каланă тăрăх, çакхине агрегатăн шатунĕ татăлса кайнă, ăна юсаттарма МТС мастерскойне кайса вăл пĕр ярă куна çухатнă.

Çакăн пек çитменлĕхсемпе кăлтăксем пулмасан, комбайнерсем хальхинчен икĕ хут тухăçлăрах ĕçлеме пултарнă пулĕччĕç. Халĕ вара вĕсем бункерти тырра пушатма сахалтан та кунне икĕ сехет ытла вăхăта сая яраççĕ.

Итем çинчи ĕçсем кая-кая пулса пынине курма пулаймарĕ. Комбайн çинчен илсе килнĕ тырра вăхăтра тасатса кĕлетсене хума тăрăшмаççĕ. Кунта МТС-ăн «ВС-8» йышши моторпа ĕçлекен сортировка тата колхозăн «ВС-2» йышши икĕ сортировки пур. Вĕсенчен пĕринпе кăна тырă тасатаççĕ. В. Иванов машиновед пĕлтернĕ тăрăх, çак сортировкăпа та тухăçлă ĕçлеме май çук: каçхи сменăра çынсем пулмаççĕ. Итем тырă куписемпе тулса ларнă. Пĕр эрне каялла тасатнă тулă халĕ те итем çинчех выртать.

— Ăна виçĕ хутчен тасатрăмăр ĕнтĕ, каллех тепре тасатмалла пулчĕ,—тарăхаççĕ кунта ĕçлекен колхозницăсем.

Чĕрĕ пирки кладовщик йышăнмасть иккен. Çав вăхăтрах çывăхри сушилкăна халĕ те юсаса ĕçе яман.

Киров ячĕпе тăракан колхоз районта чи пысăккисенчен пĕри. Кунта икĕ комбайн ĕçлет. Председатель И. Филиппов каланă тăрăх, уй-хир ĕçĕсене 350—370 çын тухать. Апла пулсан тырпула хăвăрт пухса кĕртме тата государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе срокра пурнăçлама мĕн чăрмантарать? Колхоз руководителĕсем уй-хирти тырпула пухса кĕртессине ăнăçлă вĕçлессишĕн нумай шавлаççĕ, анчах ĕç тума тăрăшмаççĕ.

Колхозăн пысăк лаптăк çинчи çуртрие пухса кĕртмелле. Ырашăн виççĕмĕш пайне те çапса пĕтермен, артель государствăна тырă парас енĕпе те юлса пырать.

Колхозра кĕлте кÿрес, авăн çапас ĕçсем вăраха кайнă. Кашни бригадăра 15—18 лав кÿлме пулать, анчах 5—6-шар лавпа çеç кĕлте турттараççĕ. Кĕлтесене вăхăтра кÿрсе капана хывманни авăн çапассине чăрмантарать.

Кăçал колхозăн 485 гектар кĕрхи тырă акмалла пулсан, ку таранa çитсе те 100 гектар ытларах кăна акнă. Ыраш акмалли лаптăк çинчен комбайн хыççăн юлнă улăма та пухман.

«1-мĕш мая» колхоз членĕсем кăçал уй-хирти тырпула пĕлтĕрхинчен чылай маларах пухса кĕртме, государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçлама сăмах панă. Анчах колхоз хăйĕн обязательствине пурнăçламасть. Çуртрисене вырасси вăраха тăсăлнă.

— Сĕлĕ пулса çитмен,—тет колхоз председателĕ Н. Васильев юлташ.

Унăн сăмахĕсемпе килĕшме çук. Акă, ял çумĕнче 5-мĕш бригадăри колхозниксем сĕлĕ çулаççĕ.

— Сĕлле пухса кĕртме кая юлса тухрăмăр,—теççĕ колхозниксем. Колхозăн тата 200 гектар çинчи тырпула пухса кĕртмелле. Апла пулин те правлени техникăпа туллин усă курма тăрăшмасть. Колхозри икĕ комбайнран пĕри иккĕмĕш кун ĕнтĕ ахаль ларать.

Вăрнар районĕнче тырпул пухса кĕртес, авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсене вăраха янă колхозсем татах та пур. Молотов ячĕпе, «Память Ленина» тата Мичурин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсем уя тухнăранпа уйăха яхăн иртнĕ, анчах тырпулăн икĕ пайне çеç вырма ĕлкĕрнĕ. Районĕпе вырса пухмалли тырă тата 2.313 гектар шутланать. Калас пулать, иртнĕ пилĕккунлăхра районти колхозсем 1.815 гектар кăна пухса кĕртнĕ. Çакăн пек хăвăртлăхпа ĕçлесен тырă вырас ĕç тата эрне ытла тăсăлма пултарать.

Тырă вырнă тата авăн çапнă çĕрте ĕçсене хăвăртлатма МТС техникипе çителĕксĕр усă курни чылай кансĕрлет. Малта пыракан хăшпĕр комбайнерсем 200-шер гектар ытла вырса пухнă. Çакна çителĕклĕ теме сăлтав çук, мĕншĕн тесен кунне 8—9 гектар çеç тивет. Пĕтĕм МТС-ĕпе илсен, комбайнсемпе вăтам шутпа куллен çавăнтан икĕ хут сахалрах вырса çапнă. В. Федоров, А. Багров, В. Прокопьев, И. Исаев т. ыт. хăшпĕр комбайнерсем вара сезон пуçланнăранпа 60—80 гектар, урăхла каласан, кунне ик-виçĕ гектар çеç вырма ĕлкĕрнĕ.

МТС тупă пысăк йăнăш çавăнта пулать: вăл тырпула çĕнĕ меслетпе—вырса пултарса пухса кĕртмелли меслетпе усă курăймарĕ. МТС-ра лафетлă жаткăсемпе виндроуэрсем çителĕклех пулнă, анчах вĕсемпе тырă вырман. Тырпул пухса кĕртес ĕç вăраха кайни тата çавна май тăкаксем нумай пулни чылай енчен çавăнтан килнĕ ĕнтĕ. Чăн та, тырпула вырса пултарса пухса кĕртесси—çĕнĕ ĕç. Ку тĕлĕшпе механизаторсен опыт сахал. Апла пулин те, тăрăшакансем йывăрлăхсене çĕнтернĕ. Сăмахран, Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхозра ăвăс пек пулса çитнĕ тырра çийĕнчех ахаль жаткăсемпе çулса пăрахнă, кайран колхозниксем типнĕ тырра комбайнпа пуçтарма юрăхлă пакkусем туса пынă. Хыçалтан комбайн пухса çапса илнĕ. Çапла майпа колхоз пысăк лаптăк çинчи тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ. Çак колхозри механизаторсен пуçарăвĕпе пахха опытне МТС дирекцийĕ те, райком та ыттисем хушшине сарма тăрăшман.

Парти райкомĕпе райисполком тата МТС руководителĕсем колхозсене çÿремеççĕ теме çук, вĕсем унта та, кунта та пулма ĕлкĕреççĕ. Анчах çакă вăл çиелтен куçа курăнакан оперативлăх кăна. Вĕсем колхозсенче тĕл пулнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермесĕрех каялла килеççĕ, кăлтăксене пĕтерме вара тырпул вырса пухма вăхăтлăха янă уполномоченнăйсем çине ытларах шанаççĕ. Районтан килнĕ представительсен усси мĕнле-ха? Çак ыйту çине Маленков ячĕпе тăракан колхозри ĕçсем те тивĕçлĕ ответ параççĕ. Район представителĕ—райсовет исполкомĕн председателĕн заместителĕ К. Кудряшов юлташ итем çине, комбайнсем патне тухса курнă пулсан, малтан асăннă çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшнă пулĕччĕ. Вăл августăн 20-мĕшĕнче каçхине правлени ларăвне ирттернĕ те район центрне тухса кайнă.

Районти колхозсемпе МТС-ра усă курман майсене ĕçе кĕртсен, уйрăмах механизмсене туллин хăватпа ĕçлеттерсен тырпул пухса кĕртессине, авăн çапса государствăна тырă леçессине халиччеихинчен икĕ хут хăвăртлатма пулать. Районăн çакăн пек тума вăй çителĕклех.

В. КУЗНЕЦОВ,
Н. ОРЛОВ,
В. МАКСИМОВ.

Вăрнар районĕ.

Обязательствăна срокчен пурнăçланă

КАНАШ. (Хыпар корр.). Горький ячĕпе тăракан колхоз Тăван çĕршыв умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе районта пуринчен малтан пурнăçларĕ. Хатĕрлев пунктне вăл 1.013 центнер тырă леçсе, государствăна кăçалхи çулшăн обязательнăй йĕркепе тата натуроплата шучĕпе памалли плана тултарчĕ.

Тырă памалли обязательствăна «Коммунар», Маленков ячĕпе тăракан, «Комсомол» т. ыт. хăшпĕр колхозсем те чылайăн пурнăçларĕç.

КАШНИ СЕХЕТРЕ—ТОННА

ЧУРАЧĂК. Хрущев ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çул «ЭС-ВИСХОМ» марклă зерносушилка илнĕ, ăна уйрăм çурт туса вырнаçтарса лартнă.

Кăçал çанталăк çăмăрлăрах тăнă пирки зерносушилкăпа анлăн усă кураççĕ. Вăл пĕр сехет хушшинче тоннăна яхăн тырă типĕтет. Зерносушилкăпа тырă типĕтесси анăпа типĕтнинчен темиçе хут усăллăрах. Вутă 7—8 хут сахал пĕтет, тырра та лайăхрах типĕтме пулать.

К. ПРОКОПЬЕВ.

Комсомольски районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозăн кукуруза уйĕнче.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: колхоз председателĕ П. Р. Карпов (сылтăмри) тата колхоз агрономĕ П. А. Васильев.

С. Гущин фотоÿкерчĕкĕ.

АВГУСТ УЙĂХĔН ИККĔМĔШ ВУНĂКУНЛĂХĔНЧЕ КАШНИ ĔНЕРЕН МĔН ЧУХЛЕ СĔТ СУСА ИЛНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

	(литрпа)
Улатăр	83,2
Кувакино	76,4
Пăрачкав	73,5
Çĕмĕрле	72,3
Чкаловски	70,7
Первомайски	68,5
Вăрнар	59,6
Сĕрпÿ	58,8
Йĕпреç	58,5
Хĕрлĕ Чутай	57,9
Шăмăршă	57,6
Вăрмар	57,6
Елчĕк	56,7
Комсомольски	55,7
Етĕрне	54,5
Тăвай	52,7
Шăхасан	51,2
Канаш	51,0
Калинино	50,6
Куславкка	50,1
Ишлей	48,5
Красноармейски	48,0
Шупашкар	46,2
Муркаш	46,1
Сĕнтĕр	45,0
Советски	44,7
Элĕк	44,0
Чурачăк	43,3
Октябрьски	42,2
Сĕнтĕрвăрри	32,2

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ СИЛОС СООРУЖЕНИЙĔСЕМ ТĂВАССИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(Августăн 20-мĕшĕ тĕлне, процентпа)

Районсем	Степисене çирĕплетнĕ сооруженисем тунă
Сĕнтĕр	92,7
Куславкка	68,6
Кувакино	67,2
Чкаловски	60,8
Вăрнар	53,9
Çĕмĕрле	52,0
Октябрьски	51,6
Комсомольски	48,6
Советски	48,0
Калинино	43,6
Элĕк	40,9
Етĕрне	40,5
Сĕнтĕрвăрри	38,8
Вăрмар	36,0
Шупашкар	35,2
Елчĕк	33,2
Йĕпреç	31,4
Первомайски	26,8
Хĕрлĕ Чутай	25,4
Шăхасан	25,4
Красноармейски	25,0
Пăрачкав	21,4
Чурачăк	20,6
Ишлей	19,9
Улатăр	18,9
Канаш	18,9
Тăвай	16,2
Сĕрпÿ	13,3
Шăмăршă	11,7
Муркаш	4,0

Силос хыватпăр

ЕЛЧĔК. Крупская ячĕпе тăракан колхозра хирти тырпула пухса кĕртнипе пĕрлех вылăхсене çитерме сĕтеклĕ апат хатĕрлесе хăварассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Кăçал артель членĕсем силос валли 100 гектар çинче кукуруза тата хĕвелçаврăнăшĕпе вика хутăшĕ ÿстерчĕç. Кăçал кашни сăвакан ĕне пуçне 6-шар тонна, кашни сысна ами пуçне 4-шар тонна, пурĕ 1.000 тонна силос хывма палăртнă.

Паянхи куна 450 тонна силос вырнаçмалăх çурма башньăсем тата траншейăсем туса хатĕрленĕ, 60 тонна силос хывнă.

П. САМСОНОВ.
Колхоз счетоводĕ.

Кантăртан пысăк тупăш

ВĂРМАР. «Герой» колхозра кашни çулах кантăр акса ÿстереççĕ, унăн вăррипе сÿсне государствăна парса пысăк тупăш илеççĕ. Колхоз кăçал государствăна планран ирттерсе сÿс парса 340 пин тенкĕ укçа тата 400 центнер ытла тулă илчĕ.

Кантăр пăхса ÿстерес ĕçре тата хутса тылланă çĕрте Н. Егоров бригадинчи колхозниксем хастарлă ĕçлеççĕ. А. Максимова, М. Зайцева, А. Скворцова, П. Зайцева, А. Титова, А. Зыкина тата ытти вуншар колхозниксем кантăр тылланă çĕрте 50—70 ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕç.

— Сÿс-кантăр туса илнĕ çĕрте колхозниксем кăçалхи пек тăрăшса ĕçлени нихçан та пулман,—тет артель членĕ Анна Зыкина.—Эпĕ пĕр эрнере 70 килограмм ытла сÿс тылласа юлтăм. Унтăн мана 140 тенкĕ укçа тата 23 ĕçкунĕ пачĕç.

Иртнĕ çулта кантăр 51 гектар çинче пухса илнĕ пулсан, артель членĕсем кăçал çак пахă культурăна 80 гектар çинче çитĕнтереççĕ. Кантăр лайăх çитĕнет.

Н. БОРИСКИН.

Социализм çулĕпе

Августăн 23-мĕшĕ—Румыни халăхĕн чаплă уяв кунĕ. Вăл пăхи хăйĕн çĕршывне фашизм пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă хĕçпăшаллă восстани пуçланнăранпа 12 çул çитнине палă тăвать.

Совет Çарĕ Аслă Отечественнăй вăрçă фронтĕнчен наступлени туса фашистла çарсене çĕнтерсе пынă, Румыни çĕрĕ çине те çитсе кĕнĕ. Çапла вара халăхсене фашизм пусмăрĕнчен хăтарма лайăх услови пулса тăнă. Çакăнта усă курса, Румынири коммунистсен партийĕ халăха хĕçпăшаллă восстани туме çĕкленĕ. Хĕçпăшаллă восстани фашистла диктатурăна сирпĕтсе антарнă, Румынире халăх революцийĕ пуçланнă.

1944 çулхи августăн 23-мĕшĕнче Румыни халăхĕшĕн çĕнĕ пурнăç тумалли çутă малашлăх уçăлнă, хăйĕн кун-çулне тăван çĕршывĕн малашлăхне хăй аллине илме май пулса тăнă.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе Румынири ĕççынисем шалти тата тулашри реакцие çĕнтерсе пычĕç, халăх демократи стройне туса хучĕç, влаçшăн пынă кĕрешÿре çĕнтерчĕç.

Унтанпа Румынире демократилле çĕр реформи туса ирттернĕ, монархие тĕп тунă, промышленноçа, транспорта, банксене национализациленĕ тата ытти революцилле улшăнусем те тунă. Румыни социализм тумалли аслă çул çине тухрĕ.

Юлашки вунă çул хушшинче утса тухнă çул çине Румынири ĕççынисем патриотла туйăмпа савăнса пăхаççĕ. Вĕсен хĕпĕртемелли нумай. Рабочисен партийĕ ертсе пынипе Румыни пысăк утăмпа малалла кайрĕ. Экономика тĕлĕшĕнчен кая юлнă, çурмаколони пулнă кивĕ Румыни текех çук. Рабочисем, хресченсем тата интеллигенци паттăр ĕçленипе хăйсен çĕршывне ирĕклĕ, никама пăхăнман халăх демократи государстви туса хучĕç, унăн экономикипе культури хăвăрт аталанса, чечекленсе пыраççĕ.

Иртнĕ çулхи декабрьте Румынири рабочисен партийĕн II съезчĕ пулса иртнĕ. Çак съезд 1948 çулхи февральте коммунистсен партийĕпе социал-демократсен партийĕн пĕрлештерÿллĕ съезчĕ пулса иртнĕренпе çĕршыва аталантарас енĕпе туса пынă ĕçсен итогне палăртрĕ тата Румыни халăхĕ умне социализмшăн кĕрешес ĕçри çĕнĕ задачăсене кăларса тăратрĕ. Съезд Румыни Халăх Республикин халăх хуçалăхне 1956—1960 çулсенче аталантармалли иккĕмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсене çирĕплетрĕ.

Рабочисен партийĕн икĕ съезчĕ хушшинчи вăхăтра Румынири ĕççынисем социализмла экономикăн никĕсне хывас ĕçре çаткăлă çитĕнÿсем тунă. Халĕ ĕнтĕ социализмла сектор промышленноçра, финанспа банк системинче, транспортра, суту-илÿре пуç пулса тăрать, ялхуçалăхĕнче те чылай пысăк вырăн йышăнать.

Румыни пĕрремĕш пилĕк çуллăх плана (1951—1955 çулсем) ăнăçлă пурнăçларĕ. Пĕрремĕш пилĕкçуллăхри тĕп задача çĕршывра социализмла индустриализацилесси пулнă. Çав çулсенче Румыни Халăх Республики, Совет Союзĕ тата ытти социализмла çĕршывсен тăванла пулăшни çине таянса, çĕршыва индустриализацилес ĕçре пысăк утăм турĕ. 1955 çулта Румыни промышленноçĕ вăрçă умĕнхи вăхăтринчен 2,9 хут нумайрах продукци туса кăларнă. Йывăр промышленность тата йывăр промышленноçăн тĕп пайĕ—машиностроени уйрăмах хăвăрт аталанса пынă. Пĕрремĕш пилĕкçуллăхра Румынири заводсем çĕршер çĕнĕ йышши аппаратсемпе машинăсем туса кăларма пуçланă. Юлашки çулсенче Румынире туса лартнă чылай предприятисем Румынире туса хатĕрленĕ оборудованипе ĕçлеççĕ. Румыни Халăх Республикинче промышленность строительстви анлăн сарăлнине çак цифрăсем кăтартса параççĕ. 1948—1955 çулсенче, çĕршывра вырăнти промышленноçăн предприятийĕсене шутламасăр, çĕнĕрен 100 ытла çĕнĕ фабрикăсем, заводсем тата ытти пысăк предприятисем туса лартнă. Çав вăхăтра 200 предприятие çĕнетнĕ тата пысăклатнă.

Румынире промышленноçăн çĕнĕ, халиччен пулман отраслĕсене туса хунă. Вĕсен шутне нефть, тимĕр тăпри кăлармалли оборудовани, энергетика оборудованийĕ, тракторсем, ялхуçалăх машинисем, груз турттармалли автомобильсем тата ытти машинăсем туса кăларни кĕрет.

Нефть промышленноçĕ халиччен курман пысăк хăвăртлăхпа аталанса пырать. 1955 çулта Румынири нефть промыслисенче 10 миллион та 575 пин тонна нефть кăларнă. Ку вăл буржуазипе помещиксем пуç пулса тăнă Румынире çулталăкра чи нумай кăларнинчен 2 миллион тонна яхăн нумайрах пулать. Халĕ ĕнтĕ нефтьрен çĕршывра тĕрлĕрен продуктсем тăваççĕ, иртнĕ вăхăтра ун пек пулман.

Пĕрремĕш пилĕкçуллăхра хими промышленноçĕ, тĕслĕ тата хура металлурги, строительство материалĕсем туса кăларасси, йывăр промышленноçăн ытти отраслĕсем те пысăк хăвăртлăхпа аталанса пынă.

Энергетика никĕсĕ чылай пысăкланнă. Çĕршыва электрификацилемелли вунă çуллăх плана пурнăçласа, Румыни халăхĕ пĕрремĕш пилĕкçуллăхра пĕсна ĕçлекен электростанцисемпе гидроэлектростанцисен 20 станци çĕнĕрен туса лартнă. Çĕршыври электростанцисен хăвачĕ икĕ хут ÿснĕ.

Йывăр промышленность хăвăртлăн аталанса пыни çĕршывра халăха кулленхи кирлĕ япаласем туса кăларассине, çăмăл тата апат-çимĕç промышленноçĕн продукцине чылай ÿстерме май панă.

Социализмла промышленноçа аталантарас тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем тунă май иртнĕ вăхăтра çĕр ĕçĕпе пурăннă Румыни индустриллĕ-аграрлă çĕршыв пулса тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ çĕршывра туса кăларакан пĕтĕм продукци çуррине ытла тата Румыни Халăх Республикин наци тупăшĕн çуррине ытла социализмла промышленность парса тăрать. Çĕршывра промышленность производствипе производство хатĕрĕсем тăвакан йывăр промышленность продукцийĕ 60 процент ытла йышăнать. Иртнĕ вăхăтра экономикăпа техника тĕлĕшĕнчен кая юлнинчен килекен пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе, Румыни халăхĕ пĕтĕм халăх хуçалăхне аталантармалли хăватлă никĕс пулса тăракан индустри туса хунă.

Румыни промышленноçĕ умĕнче иккĕмĕш пилĕкçуллăхра çĕнĕ пысăк задачăсем тăраççĕ. Çĕршыври промышленноçăн çитĕнĕвĕсем çине таянса, пысăк пуянлăхсемпе усă курса тата социализмла çĕршывсен туслăн пулăшни çине таянса, Румынири ĕççынисем иксĕлми хăватпа ĕçлесе çĕршыва индустриализацилес енĕпе çĕнĕ пысăк утăм тăваççĕ. Иккĕмĕш пилĕкçуллăхра Румыни промышленноçĕ пĕтĕмпе продукци туса кăларасси 60—65 процент, вăл шутра производство хатĕрĕсем туса кăларасси 70—75 процент тата халăх кулленхи кирлĕ япаласем туса кăларасси 50—55 процент ÿсет.

Румынире нефть тата хими промышленноçĕ валли, хура тата тĕслĕ металлурги валли чĕрĕ тавар нумай,—йывăр промышленноçăн çав отраслĕсем пуринчен хăвăртрах аталанаççĕ. Çавăн пекех энергетика, çĕр кăмрăк промышленноçĕ, машиностроени, йывăр промышленноçăн ытти хăшпĕр отраслĕсем пысăк хăвăртлăхпа аталанса пыраççĕ.

Йывăр промышленность хăвăртлăн аталанса пынă никĕс çинче тумтир, атă-пушмак, халăха кулленхи кирлĕ ытти таварсем туса кăларассине пысăкрăн ÿстерме палăртнă.

Румыни ялĕнчи ĕççынисем те пысăк çитĕнÿсем тунă. Буржуазипе помещиксем пуç пулса тăнă чухне ялхуçалăхĕ кая юлнă тата вăл пĕрмаях юхăнса пынă. Халĕ ялхуçалăхĕ хăватлăн аталанать. Пĕрремĕш пилĕкçуллăхра тĕштырă пухса кĕртмелли тата вылăх-чĕрлĕх йышне ÿстермелли задание пурнăçланă.

Румынири ялхуçалăхĕнче социализмла сектор пысăкрах та пысăкрах вырăн йышăнса пырать.

Румынири рабочисен партийĕ кăтартса панă çулпа пырса, çĕршывра ĕç хресченĕсен çĕршер пин хуçалăхĕсем коллективлă хуçалăхсене пĕрлешнĕ. 1956 çулхи июнь вĕçĕнче çĕршывра коллективлă хуçалăхсемпе ялхуçалăх юлташлăхĕсем 9.436 пулнă. Çак социализмла тата çурмасоциализмла ялхуçалăх производстви пĕрлешĕвĕсене Румыни Халăх Республикинчи ĕç хресченĕсен хуçалăхĕсен 21 процентĕ ытла кĕнĕ. Халăх демократи государстви çамрăк производство кооперативĕсене пысăк пулăшу парать, вĕсене ялхуçалăх машинисем парса тăрать, агротехника енĕпе пулăшать, çавăн пекех тата çăмăл условипе кивçен парать, налог енĕпе тата ытти енĕпе те çăмăллăхсем парса тăрать. Çĕршывра 220 ытла машина-трактор станцийĕсем ĕçлеççĕ, вĕсен 30 пин ытла трактор (15 лашавăйлĕ тракторсене çине куçарса шутласан), 1.500 комбайн, 15 пин молотилка пур тата ытти ялхуçалăх машинисем те нумай.

Çапла ĕнтĕ, Румыни ялĕнче социализм çирĕп позицисем йышăннă. Халĕ ĕнтĕ Румынири ялхуçалăхне социализмла çĕнетсе улăштармалли çулпа хăвăртрах малалла кайса пыма май килет.

Румынири рабочисен партийĕн II съезчĕ иккĕмĕш пилĕкçуллăх тĕллĕвне панă директивăсенче сутлăх тăвакан тырпула вылăх-чĕрлĕх продукцине чылай ÿстерме палăртнă. Ку енĕпе социализмла сектор пысăк ĕç тумалла, вăл 1960 çул тĕлне Румынири ялхуçалăхĕнче тырпула акмалли çĕрĕн пысăкрах пайне хăй аллинче тытмалла тата сутлăх продукцин пысăкрах пайне парса тăмалла. Çак задачăна пурнăçлама рабочисен партийĕ тата Румыни Халăх Республикин правительстви ялта социализмла сектора çирĕплетсе пыма тата ĕç хресченĕсене производство кооперативне пĕрлешес çул çине тăма хавхалантарса пыраççĕ.

Çĕршывăн халăх хуçалăхĕ ÿссе пынипе пĕрле Румынири ĕççынисен пурнăçĕ лайăхланса, культура шайĕ ÿссе пырать. Румыни Халăх Республикин наци тупăшĕ 1955 çулта, 1938 çулхипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн ÿснĕ. Рабочисемпе служащисен ĕç укçи тата хресченсен тупăшĕсем пĕрмаях ÿссе пыраççĕ, государство пурăнмалли çуртсем тума, халăх сывлăхне сыхлама, халăха вĕрентме, халăхшăн кирлĕ тата ытти ĕçсем тума укçа уйăрса парасси пĕрмай ÿссе пырать.

Румынире чăн-чăн культурăлла революци пулса пырать. Кивĕ йĕрке чухне халăх хутла пĕлмен. Халĕ ĕнтĕ Румыни Халăх Республикинче хутла пĕлменлĕхе пĕтерсе çитернĕ пĕрех. Çĕршывра ачасене пурне те пуçламăш шкулсенче вĕрентессине пурнăçланă. Çичĕ çул вĕрентмелли тата вăтам шкулсем пиншер уçнă, ремесла училищисемпе техника шкулĕсем те çĕршер уçнă. Иртнĕ вăхăтра аслă шкулсем пурĕ те 16 пулнă пулсан, халĕ вĕсен шучĕ 42 çитнĕ, студентсен йышĕ икĕ хут ÿснĕ. Халăх влаçĕ пулнăранпа халăх хуçалăхне культура строительствинче ĕçлеме специалистсем вуншар пин çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Çĕршывра культура çурчĕсем, кинотеатрсем, библиотекăсем, вулав çурчĕсем тата ытти культурăпа çутĕç учрежденийĕсем нумай ĕçлеççĕ. Румынире пурăнакан мĕнпур халăхсен чĕлхипе кĕнекесем, журналсем, хаçатсем нумай пичетлесе кăлараççĕ.

Халăх демократи влаçĕ пулнăранпа çĕршывра наука, искусство тата литература чечекленсе ÿссе пыраççĕ. Писательсемпе артистсем, художниксемпе композиторсем, ученăйсем, интеллигенцин ытти отрячĕсен представителĕсем те форми енĕпе наципле, содержани енĕпе социализмла çĕнĕ культурăна аталантарас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Буржуазла-помещикла Румыни экономика тата политика тĕлĕшпе хĕвеланăçĕнчи çĕршывсене пăхăнса пурăннă, халăха хирĕç пырса влаçа хăйсен аллинче тытнă çынсем вара ют çĕршывсенчи империалистсен хушăвне пурнăçласа пынă.

Халăх влаçĕ пулнăранпа Румынин тĕнчери лару-тăрăвĕ тĕпренех улшăннă. Çĕнĕ Румыни — никама пăхăнмасăр пурăнакан, хăйне кирлĕ ĕçсене хăй туса пыракан государство. Румыни Халăх Республикин тĕнчери ирĕклĕ социализмла çĕршывсен пĕрлешĕвĕнче тăрать, çак пĕрлешÿ пĕрлĕхлĕ тĕллевсемпе, миршĕн тата халăхсен малашнехи ырă пурнăçĕшĕн кĕрешмелли аслă идейăсемпе çирĕп пĕтĕçнĕ. Румыни Совет Союзĕпе, Китай Халăх Республикипе тата ытти социализмла çĕршывсемпе тăванла çирĕп туслăхпа пĕтĕçсе, килĕштерсе ĕçлесе пурăнни ăна экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен хăвăрт малалла кайма, никама пăхăнмасăр пурăнма май парать. Ытти социализмла государствăсемпе пĕрле Румыни тĕнчери лару-тăрури йывăрлăха чакарассишĕн, государствăсем пĕр-пĕрне шанса пурăнмалла тăвассишĕн, халăхсем мирлĕ, туслă пурăнмалла тăвассишĕн тăрăшать.

Румыни Халăх Республикин тĕнчери авторитечĕ ÿссе пырать. Совет Союзĕ тата ытти мире юратакан çĕршывсем тăрăшнипе иртнĕ çулхи декабрьте Румыние Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илнĕ. Ку вăл Румынипе тĕнчери мире çирĕплетессишĕн тата мĕнпур çĕршывсем туслă килĕштерсе ĕçлемелле тăвассишĕн кĕрешессине çĕнĕ майсем туса пачĕ.

Румынири ĕççынисем марксизм-ленинизмăн вилĕмсĕр вĕрентĕвĕ çутатса панă çулпа çирĕппĕн пыраççĕ, çавăнпа вĕсем хăйсен халăх демократилле государствине çирĕплетессишĕн, экономикăпа культурăна аталантарассишĕн, социализм никĕсĕсене тăвассишĕн кĕрешес ĕçре историлле пысăк çĕнтерÿсем тума пултарчĕç. Çак çулпа вĕсене Румынири рабочисен партийĕ—Румыни халăхĕн малти отрячĕ, унăн кĕрешÿре тĕрĕсленĕ руководителĕ тата организаторĕ — шанчăклăн ертсе пырать. Румынири условисенче марксизм-ленинизм теорине творчествăлла пурнăçласа, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн тата ытти çĕршывсенчи коммунистсен партийĕсен пуян опычĕпе усă курса, Румынири рабочисен партийĕ халĕ çĕршывра ĕççынисене социализм строительствинче çĕнĕ задачăсене пурнăçлассишĕн хăватлăн ĕçлемелли çулпа илсе пырать.

Ф. ИВАНОВ.



РУМЫНИ ХАЛАХ РЕСПУБЛИКИ.

Укерчĕксем çинче: 1. Бухарест. В. И. Ленин ячĕпе тăракан плана экономика институчĕ; 2. Яссы хули. Европăри антибиотиксем хатĕрлекен чи пысăк заводсенчен пĕри. Антибиотика фабрикин ферментаци цехĕ.

Румыни телеграф агентстви фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Комбинат тата унăн çыннисем

«Чăвашстрой» трестăн производство предприятийĕсен комбиначĕ автомашинăсем татти-сыпписĕр килсе тăраççĕ. Вĕсем хулари стройкăсене детальсем, çурса татса хатĕрленĕ йывăç материалсем турттараççĕ.

— Кунне аллă автомашинăран кая ăсатмастпăр, — каласа парать комбинат директорĕ Дмитрий Васильевич Стяжков юлташ. — Авă, хатĕр детальсем тата мĕн чухлĕ!

Стяжков юлташ комбинат коллективĕ кăçал пĕлтĕрхинчен чылай тухăçлăрах ĕçлени çинчен калать. Чăн та, кăçал ку таранччен плана тултарман пĕр уйăх та пулман-ха. Çур çул программине вăл 102,7 процент, июль уйăхĕнчи задание 109,3 процент пурнăçланă. Ĕç тухăçлăхĕ ултă уйăх хушшинче плана пăхнинчен 26,8 процент ÿснĕ. Производствăна механизацилеме тата техникăна тулли усă курнипе рабочисен ĕç укçи те ÿсе пырать.

Комбинатра хăйсен специальноçне ăста пĕлекен рабочисем йышлă. Евгений Павлович Смолов столяр хăй комбинатра ĕçленĕ çулсенче тĕрлĕ йышши стройкăсем валли мĕн чухлĕ деталь туса кăларнине шутласа та кăларма çук. Вăл утмăл пилĕкре, трестра çирĕм виçĕ çул ĕçлет. Смолов юлташ государство пенсийĕ илсе тăрать.

— Партипе правительство совет çыннисемшĕн вĕçĕмсĕр тăрăшаççĕ. Ăна хамăр пурнăçра туятпăр,—тет вăл.—Нумаях пулмасть СССР Верховнăй Совет сессийĕ Государство пенсийĕсем çинчен калакан Закон йышăнчĕ. Çĕнĕ Закон пурнăçа кĕрсен, эпĕ уйăхра пенси кăна çичçĕр тенке яхăн илсе тăратăп. Вăл мана пĕтĕм çемйипех тулăх пурăнма çитет. Çапах ĕçлеме пăрахма шутламастăп-ха.

Столяр Е. Смолов.

Смолов юлташа кашни кунах цехра курма пулать. Халĕ вăл столярсен бригадине ертсе пырать. Унта ултă çын. Вĕсем кăткăс ĕçсене: чÿрече рамисене, алăк тата кантăк янаххисене тăваççĕ. Туслă коллектив задание уйăхран уйăха ирттерсе пурнăçлать: июль уйăхĕн планне 165 процент тултарчĕ. Евгений Павлович юратнă ĕçе хăйĕн пĕтĕм вăй-хăвачĕпе пули опытне парать, çамрăксене çине тăрса вĕрентет. Ахальтен мар унăн сăнÿкерчĕкне трестри Хисеп хăми çинче курма пулать. Строительсен кунĕ ячĕпе РСФСР Хула тата ял строительство министерстви ăна «Социализмла ăмăрту отличникĕ» значок памалла тунă.

Василий Иванович Мартыненко юлташ та Е. Смоловпа пĕр вăхăтрах трестра ĕçлеме тытăннă. Малтанхи çулсенче рабочи, унтан разметчик пулса ĕçленĕ. Производствăрах тĕрлĕрен специальность тупнă. Халĕ вăл фрезерлĕ станокпа ĕçлет.

Çирĕм икĕ çул хушшинче вăл пайтах ĕçленĕ. Советсен çурчĕ, универмаг, гастроном тата ытти çуртсем валли те чÿрече рамисемпе алăксем туса панă. Хулари шкулсем валли сĕтелсемпе пукансем, партăсем мĕн чухлĕ тунă пулĕ! Мартыненко юлташа ĕçре паха çитĕнÿсемшĕн вунсакăр хутчен премиĕ, тăватă хутчен Хисеп грамоти панă. Вăл ăста производственник кăна мар, рационализатор та. Нумаях пулмасть унăн сĕнĕвĕпе шăтармалли станока урăхлатса çĕнетнĕ. Унпа иртнĕ вăхăтсенче сменăра 900 пукан ури шăтарнă пулсан, халĕ икĕ пин е ытларах та шăтараççĕ.

Фрезеровщик В. Мартыненко.

1943 çулта Сĕнтĕрвăрри хулинчи ФЗО шкулне вĕренсе пĕтерсенех Татьяна Михайловăна комбината ĕçлеме янă. Малтанхи вăхăтра унăн ĕçре йывăрлăхсем тÿсме тивнĕ. Хăш чухне станок йĕркеллĕ ĕçлемен, тепĕр чухне туса хатĕрлекен детальсем тĕрĕс пулман. Татьяна Михайловна вара питĕ пăшăрханнă, анчах мастертан ыйтса пĕлме именнĕ. Ватă производственниксем ăна ĕçре нумай пулăшнă. Халĕ вăл пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăвать, механизмсене таса тытать. Алăк валли çурнă хăмасене станокпа питĕ ăста саваласа якатать. Июль уйăхĕнчи задание вăл 162 процент пурнăçланă. Унăн сăнÿкерчĕкне те трестри Хисеп хăми çине кĕртнĕ.

— Производствăра нумай вĕрентĕм. Халĕ эпĕ столяр, рамщик, станочник ĕçĕсене те ăнăçлă туса пыма пултаратăп,—тет Татьяна Михайловна.

Комбинатра хастар ĕçлекенсем татах нумай. М. Клементьева станочница, С. Балахан столяр, Ф. Калашников столяр ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ, паха продукци туса кăлараççĕ.

— Çĕнĕ пилĕкçуллăх заданийĕсене срокчен пурнăçласшăн ырми-канми тăрăшатпăр,—теççĕ комбинат çыннисем.

Комбинат коллективĕ çынсем ÿсе пынине курса савăнать, вĕсемпе тивĕçлипе мухтанать.

— Хула çултан-çул ÿсет. Ăçта пăхнă—унта пысăк стройкăсем. Анчах комбинат çав стройкăсен ыйтăвне пĕтĕмĕшпе тивĕçтерсе çитерейместх-ха. Çавăнпа та ăна пысăклатма, çĕнĕ техникăпа пуянлатма палăртнă,—тет комбинат директорĕ.

С. ФЕДОТОВ.

Техникăпа лайăхрах усă курмалла

ЙĔПРЕÇ. Çак кунсенче районти промышленность предприятийĕсенче ĕçлекенсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура районти предприятисем КПСС XX съезчĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен райплан председателĕ П. Вдовенков юлташ доклад турĕ.

Районти промысла артелĕсемпе вăрман промышленноçĕн предприятийĕсем продукци туса кăлармалли çичĕ уйăхри плана 102 процент тултарнă. Буинск вăрманпромхозĕ пĕр тикĕс ĕçлет. Вăл çичĕ уйăхри плана ирттерсе тултарнă.

Йĕпреç вăрманпромхозĕ те лайăхрах ĕçлеме тытăннă. Кунта йывăç касса сыхăламалли, тиемелли тата çул хĕррине илсе тухмалли ĕçсене пĕтĕмпех механизациленĕ. Мастер участокĕсенче, склăдсенче малта пыракансен опычĕпе усă кураççĕ. Йывăçсене сыхăламасăр турттарни ĕç тухăçлăхне ÿстермелли паха меслетсенчен пĕри пулса тăрать. Чернореченскри автоçул коллективĕ çак меслетпе ĕçлесе куллен 500 кубометра яхăн йывăç турттарать. Бондаренко, Пархоменко, Барышев тата ытти хăшпĕр шоферсем «МАЗ-200» автомашинăпа кашни рейсра 22—25 кубометр таран йывăç турттараççĕ. Кăçалхи çур çулта вăрманпромхоз планран ирттерсе 4 пин кубометр йывăç хатĕрленĕ.

Хăшпĕр артельсемпе предприятисем съезд решенийĕсене çителĕксĕр пурнăçлаççĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, районти 17 артельпе предприятирен саккăрăшĕ çеç çичĕ уйăхри плана тултарнă. Уйрăм предприятисемпе артельсенче ĕç тухăçлăхне ÿстермелли майсемпе усă курмаççĕ, строительство ĕçĕсене вăраххăн тăваççĕ. «За коммунизм» артель продукци туса кăлармалли çичĕ уйăхри плана 70 процент кăна тултарнă. Мĕнре-ха сăлтавĕ? Артель правленийĕпе, пуçламăш парторганизаци шалти резервсемпе усă курма тăрăшмаççĕ. Цехсенче хăма çурмалли хăватлă рамăсем тата ытти тĕрлĕ оборудовани пур. Йывăç турттарма автомашинăсем çителĕклĕ. Ĕçе тĕрĕс йĕркелени тата техника вăйĕпе тулли усă курни çеç кирлĕ.

Буинскри йывăç япаласем тăвакан комбинат нумайранпа юлса пырать, производство планне тултармасть. Комбинат директорĕ Глухойкин, технорук Викторов юлташсем рабочисем хушшинче сайра пулаççĕ. Комбинат ĕçĕнчи чи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл техникăна хакламанни тата унпа усă курма тăрăшманни пулать.

«Спотара» заводĕ вăрманта йывăç касса хатĕрлемелли кварталсем инçе мар. Апла пулин те вăл продукци туса кăлармалли иртнĕ уйăхри плана тултарман. Автомашинăсемпе, хăма çурмалли рамăсемпе тата станоксемпе тухăçлă ĕçлемеççĕ. Завод дирекцийĕ тата профсоюз организацийĕ рабочисен кулленхи ыйтăвĕсемпе сахал интересленеççĕ. Уйрăмах пурăнмалли çуртсем тата культурăпа йăла çурчĕсем тăвасси юлса пырать.

Йĕпреç тата Буинск вăрманпромхозĕсен ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Уйрăмах çакна палăртмалла: хăшпĕр мастер участокĕсенче техникăпа усă курмаççĕ. Вăрманпромхоз руководителĕсем малта пыракан механизаторсен опытне вĕренессине кирлĕ пек йĕркелемен.

Районти промкомбинат çынсен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерсе пыраймасть. Вăл туса кăларакан продукци пахалăхĕ начар. Çĕвĕ çĕлекен тата атă-пушмак çĕлекен цехсем пĕр тикĕс ĕçлемеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл çур çулхи плана тултарайман.

Канашлура тухса калакансем промышленность предприятийĕсене ертсе пырас ĕçĕнче республикăри министерствăсем начар ĕçленине палăртрĕç.

— Пирĕн комбинатра,—тет Буинскри йывăç япаласем тăвакан комбинат технорукĕ Викторов юлташ,—техникăна пĕлекен кадрсем çитмеççĕ. Ку тĕлĕшпе эпир Чăваш АССР Вырăнти промышленность министрне Бобров юлташа пĕр хут çеç мар пĕлтернĕ. Анчах министерство работникĕсем çак ыйтăва татса памаççĕ. Министерство работникĕсем вырăнта пулнă чухне производствăпа тĕплĕн паллашмаççĕ, практикăлла пулăшу памаççĕ.

Буинск поселок Совечĕн председателĕ Борисов юлташ «За коммунизм» артель руководителĕсене поселокра атă-пушмак юсамалли мастерской уçманшăн критиклерĕ.

Канашлура пулнисем çулталăк планне срокчен—декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство йышăнчĕç.

(Хамăр корр.).

РУМЫНИ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИ.
БУХАРЕСТ, «Чишмиджиу» паркĕнчи кÿлĕ.
(ТАСС фотохроники).

Редакцие килнĕ çырусем

Кашни киле—радио

Улттăмĕш пилĕкçуллăхра ялсене радиофикацилес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тума палăртнă. Чкаловски районĕнче çитес икĕ çул хушшинче пур ялсене те радио кĕртсе çитермелле.

Районта 19 колхоз. 1952 çулта тăватă колхоза кăна радиофикациленĕ пулнă. Халĕ 12 колхозра радио итлеççĕ. План тăрăх кăçал çĕнĕрен 500 радиоточка кĕртмелле. Çыхăну работникĕсемпе колхоз правленийĕсем тăрăшнипе çак плана ăнăçлă тултарнă. Халĕ эпир планран ирттерсе 200 точка кĕртсе çитерессишĕн кĕрешетпĕр.

Кăçал Ленин ячĕпе тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсене радиофикацилес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. Район центрĕнчен 20 километрти Алманчă ялĕнче 220 киле радио кĕртнĕ. Тĕренкасĕнче 103 киле радио кĕртсе, Мичурин ячĕпе тăракан колхоза радиофикацилесе çитертĕмĕр. Кусемсĕр пуçне халиччен ĕçлекен линисем çинче 190 точка хушса тунă. Ялсене радиофикацилес тĕлĕшпе малта пынăшăн колхозсен председателĕсем Никитинпа Ситов юлташсем тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Ситов юлташ радио кĕртме колхозниксене аванс шучĕпе укçа парса пулăшрĕ.

Районта радиоточкăсен хисепне ÿстермелли майсем нумай. Пур пек линисем çинче татах 1.200 точка лартма пулать. Сăмахран, Чкаловски ялĕнче 800 хуçалăх, вĕсенчен 100 хуçалăха кăна радио кĕртнĕ. Натăркасĕнче 600 килрен виççĕрĕшĕнче радио çук.

Ку мĕн çинчен калать-ха? Колхозниксем хушшинче радио пĕлтерĕшĕ çинчен çителĕксĕр ăнлантарса параççĕ. Хăшпĕр колхоз руководителĕсемпе партиорганизаци секретарĕсем радио пирĕн партин çивĕч хĕçпăшалĕ пулса тăнине шута илмеççĕ. Шел пулин те, çакна малта пыракан «Гвардеец» колхоз председателĕ Долгов юлташ адресĕпе калама тивет. Ку колхоза кĕрекен Туçа ялĕнче 1955 çул вĕçĕнче 200 киле радио кĕртнĕччĕ. Репродукторсем туянса лартман пирки хальхи вăхăтра вĕсенчен 100 хуçалăхра кăна радио итлеççĕ. Кирен ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Чувайкин юлташ ăна радиофикацилеме тăрăшмасть. Ку колхоза линии хывма йывăç уйăрса панăччĕ, анчах Чувайкин юлташ юпасене турттарса кăларма кăмăл тумарĕ. «Пламя Октября» колхоз председателĕ Салицев юлташ хатĕрленĕ юпасене вăрмантан турттарса кăларас ĕçе пăрахса хăварчĕ. Çавна май колхоза радиофикацилес ĕç чăрăнса ларчĕ. Тĕренкасĕнче радиофикаци строительствăпа монтаж участокĕн бригади ĕçлерĕ. Ĕçе йышăничченех Матвеев бригадир пăрахса кайнă пирки июль уйăхĕнче хывнă çак çĕнĕ линипе усă курма тытăнман-ха.

«Дружба», Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз руководителĕсем хăйсен ялĕсене кăçалах радиофикацилесе çитерме тăрăшаççĕ. Çыхăну работникĕсен тивĕçĕ — юпасемпе ытти материалсене вăхăтра уйăрса парса, çак колхозсенче радио итлемелле тăвасси. Чепкас ялне радио кĕртме юпасем тахçанах лартса тухнă, анчах республикăри Çыхăну управленийĕн склачĕсенче проводсем çукки ĕçе вĕçне çитерме чарса тăрать.

Л. ШМАКОВ.
Чкаловски районĕнчи çыхăну конторĕн начальникĕ.

Вутă ытларах хатĕрлеме пулать-и?

«Коммунизм ялавĕ» хаçат хăйĕн «Вутă тата торф ытларах хатĕрлер» ятлă умстатьинче республикăра ĕçсыннисене колхозсем валли вутă хальхинчен нумайрах хатĕрлемелли майсем пирки çинчен ыйтăва тĕрĕс те вăхăтра хускатать. Тĕслĕхшĕн, хамăр вăрман хуçалăхнех илер. Вăл нарядсем тăрăх колхозсемпе ĕçсыннисене чылай вăрман уйăрса парать, вăрмана пăхса ÿстермелли йĕркесем тăрăх сайралатса касакан йывăçсене чылай сутать. Кунсăр пуçне пирĕн вăрман хуçалăхĕнче ватăлнă е çил-тăвăл пирки йăваннă (ăна «валежник» теççĕ) тата хăрнă йывăçсем 10 пин кубометра яхăн пур. Çавăн пек йывăçсем пуринчен ытларах Кире лесничествинче, «Спотара» заводпа Йĕпреç районĕнчи Тарăнвар ялĕ хушшинче нумай. Кунта çулсеренех чылай йывăç çĕрет. Чăн та, çуркуннепе кĕркунне е çумăр çунă вăхăтра унтан йывăça турттарса кăларма кансĕр, мĕншĕн тесен паха çулсем çук. Шăнсан вара лавсемпе çеç мар, автомашинăсемпе те илсе тухма пулать.

Топливо промышленность управленийне пăхăнса тăракан вăрманпромхозсем, колхозсем тата ĕçсыннисем кунта хăйсем валли вутă халех касса хатĕрлеме, çĕр шăнсан е çуна çулĕ ларсан вара ăна турттарса кăларма пултараççĕ.

Çавăн пек усăсăр çĕрсе выртакан йывăç ытти вăрман хуçалăхĕсенче те чылай. Тĕслĕхрен, Кире вăрман хуçалăхĕнче 30 пин кубометра яхăн валежник пур. «Чăвашвăрман» трестне пăхăнса тăракан вăрманпромхозсем час-часах касса хатĕрленĕ йывăçсене çийĕнчех турттарса кăлармаççĕ тата шуратмаççĕ, çавна пула паха, ĕçе юрăхлă йывăçсем çуркаланаççĕ тата çĕреççĕ. Виç-тăватă çул вăрманта выртнă хыççăн вара çавăн пек йывăça «списать» тăваççĕ. Кун пек йĕркесĕрлĕхе пĕтерсе, ĕçе юрăхлă мар пĕренесене вутă тумалла, çĕртмелле мар.

Уйрăм çынсен, хăйсем валли вутă хатĕрлес тесен, райпланран ордер илмелле. Вутă хатĕрлеме кашни вăрман хуçалăхĕ çумне уйрăм районсене çирĕплетеççĕ. Çавăн пек йĕрке юрăхсăр тесшĕн мар эпир. Анчах, пирĕн шухăшпа, ялсенчен инçерех, çулсем çук вăрманта выртакан валежника пухса хатĕрлеме ĕçсыннисене е колхозсене райплансен ордерĕсемсĕрех ирĕк памалла. Хальхи йĕрке тăрăх, пирĕн вăрман хуçалăхĕ, сăмахран, Чурачăк, Красноармейски, Элĕк районĕсенчи ĕçсыннисене, валежник çĕрсе выртать пулин те, ăна касса хатĕрлеме ирĕк пама пултараймасть. Эпир Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин Вăрман хуçалăх управленийĕ çак ыйтăва татса парасса шанатпăр. Чылай районсенчи ĕçсыннисем вутăсăр аптраса пурăннă вăхăтра çулсерен пиншер кубометр йывăça çĕртсе янипе малашне чăтса тăма юрамасть.

Н. АНТОНОВ,
Йĕпреç вăрман хуçалăхĕн директорĕ.

Лаша паспорчĕ кам парать?

ЕЛЧĔК. Йĕрке тăрăх, çулталăк иртсен кашни лаша ятне, тĕсне, çулне, çÿллĕшне кăтартакан уйрăм паспорт тумалла. Райисполкомăн ялхуçалăх пайĕ пур чухне лашасене паспорт парас ĕçе унти лашасем енĕпе ĕçлекен зоотехник туса пыратчĕ. Халĕ вара колхозсенчи лашасене 1952 çултанпах паспорт памаççĕ. Колхозра лаша вилсен, çухалсан е сутас пулсан, унăн паспорчĕ çукки чăрмантарать.

В. ЕРМАКОВ.
Çĕнĕ Пăва ял Совет исполкомĕн секретарĕ.

Туслăх

Румынире курса çÿренĕ чухне çырса пынисем

...Эпир Румыние çитрĕмĕр. Урăх çĕршыва кăна мар, урăх яла пырса кĕрсен те лайăхрах сăнама, пурне те асра хăварма тăрăшатăн. Эпир тĕлĕнерех пăхни, тимлĕрех сăнама тăрăшни çынсене тÿрех сисĕнет пулас. Вĕсем те пирĕн çине пăхаççĕ, унтан вырăсла калаçнине илтсен:

— Эсир Российăран-и? Совет Союзĕнчен-и?—тесе ыйтаççĕ.

Хамăр ăçтан иккенне пĕлтерсен, калаçу хĕрсе пуçлать. Халиччен палламан çын ăшă-ăшă куçпа пăхать, алăсене чăмăртать, вара чăтса тăма хал çитереймест пулас, ĕмĕр палласа-пĕлсе пурăннă пĕлĕшĕпе курнăçнă чухнехи евĕр ыталаса чуптăвать.

Çакă мĕне пĕлтерет-ши? Ку вăл—нихçан сÿнми çирĕп туслăх, румынсемпе совет çыннисен туслăхĕ. Вăл туслăха эпир вутпа, юнпа çирĕплетнĕ. Кăна пурте лайăх пĕлеççĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче румын халăхĕн те, пирĕн те пĕр тăшман—этем мурĕ—фашизм—пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ палламан-курман çынсем халĕ хăвăрт туслашаççĕ, тăвансем пек ыталаса чуптăваççĕ. Çакă вăл миршĕн кĕрешекенсен туслăхĕ, çав туслăха никам та аркатаймĕ.

Эпир Шупашкартан вунпиллĕкĕн тухрăмăр. Мускавра пирĕн ушкăна ытти облаçсенчен Румыние каякан туристсемпе пĕрлештерчĕç.

Пирĕн поезд Яссы хулинчен Плоешти еннелле каять. Чÿречерен пăхатăн та шап-шурă чечекре ларакан садсене куратăн, тавралăх—ем-ешĕл. Ялсем йăлтах йывăçсен айне пулнă. Акă çулçи те палăрмасть, хĕп-хĕрлĕ çырлапа йывăçсем вĕлтлете-вĕлтлете юлаççĕ. Кусем—черешньăсем иккен. Станцие çитетпĕр. Поезд кĕске вăхăта çеç чарăнса тăрать пулин те, эпир вагонсенчен тухатпăр. Курас, пĕлес килет-çке-ха! Хăйхи хĕрлĕ çырласене — черешньăсене—сутма тухнă.

Пире каллех румынсем çавăрса илеççĕ. Кулаççĕ, калаçаççĕ, шÿтлеççĕ. Вĕсем хăйсен адресĕсене параççĕ, хăнана кĕрсе тухма чĕнеççĕ. Эпир вĕсене асăнмалăх значоксем е Мускав сăнне ÿкернĕ ÿкерчĕксем парнелетпĕр. Поезд кăшкăртать. Вагонсене кĕретпĕр. Чÿречерен алă сулатпăр.

Плоештире эпир чарăнса тăмарăмăр. Пире автобуссем çине лартрĕç те, Синая хулине илсе кайрĕç. Плоешти хули нефтьрен пуян. Вышкăсем тÿпенелле кармашса лараççĕ.

Синайăна эпир каçхине çитрĕмĕр. Пире «Синая» ятлă гостиницăна вырнаçтарчĕç. Каçхине эпир нимех те кураймарăмăр. Ир пулчĕ. Малтан хулана чÿречерен пăхма тапратрăмăр. Йĕри-тавра çÿлĕ тусем. Тусем çинче—вăрман. Чи тăррине вара юр выртать.

Синая—калама çук илемлĕ хула. Ахальтен мар-тăр, ку таврара кану çурчĕсем нумай. Эпир виçĕ кану çуртĕнче пултăмăр. Акă, майăн 9-мĕшĕ ячĕпе тăракан кану çурчĕ. Вăл тинĕс шайĕнчен 1.400 метр çÿлте ларать. Кунта канма урăх çĕршывсенчен те килеççĕ. Халĕ Демократиллĕ Германи Республикинчен килнĕскерсем канатчĕç. Эпир вĕсемпе курнăçаймарăмăр, вĕсем тусем хушшине уçăлса çÿреме тухса кайнăччĕ. Ку çуртран мĕнпур тавралăх ал тупанĕ çинчи пекех курăнать.

Акă—Предялти кану çурчĕ. Ăна вăрçă хыççăн кăна туса лартнă. Канакансем валли кунта пурте пур: библиотека, вăйă пÿлĕмĕсем. Библиотекăра вырăс писателĕсен кĕнекисем нумай вара.

Тепĕр кунне Пелеш дворецне курма кайрăмăр. Ку двореца I-мĕш Карл тунă. Ĕлĕк кунта король тата ăна çывăх çынсем çеç ырă курса пурăннă. Халĕ Пелеш дворецĕ музей шутланать, Музее халăх пĕр вĕçĕмсĕр çÿрет. Пелешран инçех те мар—Пелешор. Унта халĕ литературăпа искусство работникĕсем канаççĕ. Кунта эпир государство премийĕн лауреачĕсемпе Миху Драгомир, Николае Тауту поэтсемпе, çавăн пекех Келераш кинорежиссерпа, Лаврреску артистпа паллашрăмăр. Каллех пĕр-пĕрин адресĕсене çырса илтĕмĕр, малашне çыхăну тытма пултăмăр. Вĕсем пире Румыни литературипе искусстви çинчен каласа кăтартрĕç.

Ăçта кăна пырсан та, кампа кăна тĕл пулсан та пире хапăлласах кĕтсе илеççĕ. Вĕсем хăйсен хулипе çывăхрах паллаштарма тăрăшаççĕ, ăнлантарса параççĕ. Çакна вĕсем йăлтах кăмăлтан, чунтан тăваççĕ. Ку вара пурне те савăнтарать, пĕр-пĕрине хăвăрт çывăхланма пулăшать.

Синайăран пире Сталин (Брашов) хулине илсе кайрĕç. Ку индустриллĕ хула, кунта заводсем чылай. Эпир вĕсенчен пĕринче—трактор заводĕнче пултăмăр. Ку завода вăрçă хыççăн тунă. Цехсенче çÿренĕ чухне эпир Совет Союзĕнче тунă станоксене куртăмăр. Ушăн Румыни рабочийĕсем пирĕн çĕршыва чун-чĕререн тав тăваççĕ.

Сталин хулинче тĕрлĕ халăх пурăнать. Кунта румынсем, венгерсем, нимĕçсем пур. Çавăнпа та эпир шкулсем çинчен ыйтса пĕлтĕмĕр. Ачасем шкулта хăйсен тăван чĕлхипе вĕренеççĕ. Петр Хусанкайпа пĕрле ятарласах венгерсен шкулне кайса куртăмăр. Ачасем хавасланах кĕтсе илчĕç. Вĕсем пирĕн шкул ачисем, пионерсем çинчен ыйтса пĕлчĕç. Унтан пĕри:

— Пирĕн сирĕн хулари шкул ачисемпе çыхăну тытас килет. Пире пĕр-пĕр шкул адресне парăр-ха,—тесе ыйтрĕ. П. Хусанкай вара вĕсене пĕр шкул адресне пачĕ.

Нумай та вăхăт иртмĕ вĕсем пĕр-пĕрин патне çырусем çырма тытăнĕç. Çапла вара ачасен çирĕп туслăхĕ пуçланса кайĕ.

Ачасене эпир пионер значокĕсем парнелерĕмĕр. Вĕсемпе туссем пек алă тытса уйрăлтăмăр.

Ачасем çинчен сăмах каланă май, манăн Бухарестри пионерсен çурчĕ çинчен те кĕскен каласа парас килет. Ĕлĕк çак дворецра короле çывăх çынсем пурăннă. Кунта никам та кĕреймен. Дворецра пĕртен-пĕр вĕренекен король ывăлĕ пулнă. Халĕ вара, Бухарестри шкул ачисемшĕн, çак дворец тăван кил вырăнне. Урoксем хыççăн вĕсем хавасланах çавăнта килеççĕ.

Эпир пĕр пÿлĕмрен тепĕр пÿлĕме куçса çÿретпĕр. Акă — авиамоделистсем. Кунта мĕн тĕрлĕ самолет çук-ши? Кружок членĕсем тимлĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсене инструктор кăтартса, ăнлантарса парать.

Ташă пÿлĕмĕ. Ачасем пăхса тăраççĕ. Кружок руководителĕ вĕсене мĕнле хускану тумаллине кăтартать, унтан пурне те хăй хыççăн туса пыма ыйтать. Кружокра тĕрлĕ халăхсен ташшисене вĕренеççĕ.

Физика, химия кабинечĕсем. Кунта вара тĕрлĕ опытсем тăваççĕ, шкулта вĕреннине çирĕплетеççĕ.

Эпир Ленин пÿлĕмне кĕретпĕр. Стенасем çинче Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе Совет Правительствин руководителĕсен портречĕсем çакăнса тăраççĕ. Ку пÿлĕмре ачасене Совет Союзĕ çинчен кала-кала кăтартаççĕ, вĕсем В. И. Ленина курнă çынсемпе тĕл пулаççĕ.

Ку пÿлĕмпе юнашарах — Румынири Коммунистсен партийĕн пÿлĕмĕ. Кунта — Г. Георгиу-Деж, Киву Стойка, Петру Гроза портречĕсем. Пионерсем çакăнта ватă коммунистсем, новаторсем каласа панисене итлеççĕ, хăйсен çĕршывĕпе тĕплĕн паллашаççĕ.

Румыни правительстви çак двореца ачасене июнĕн 1-мĕшĕ ячĕпе парнеленĕ. Çак куна пурте пĕлеççĕ: вăл ачасене хÿтĕлемелли кун. Румыни пионерĕсем телейлĕ те савăнăçлă ÿсеççĕ. Ÿссе çитсен вĕсем ашшĕсем вырăнне ĕçе тăрĕç; хăйсен çĕршывне малтан-мала кайма пулăшĕç. Çавăнпах вĕсемшĕн пурте тăрăшаççĕ.

Бухарестран эпир Снагова кайса куртăмăр. Мĕн тери илемлĕ вырăн! Йĕри-тавра вăрман, вăрман варринче пысăк кÿлĕ. Унта кимĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр ярăнаççĕ. Снагова кашни канмалли кунах пиншер çын килет. Камăн çакăн пек вырăнта канас килмĕ?

Снаговра королĕн кану резиденцийĕ пулнă, халĕ кунта кану çурчĕ. Унта пулнă хыççăн эпир кунти монастыре кайрăмăр. Ăна XIV ĕмĕрте тунă. Монастырьте виçĕ монах пурăнать.

— Халăх çÿрет-и?—ыйтрăмăр эпир вĕсенчен.

— Ĕлĕк çÿретчĕç... Халĕ çÿресех каймаççĕ,—тунсăхлăн хуравлать пĕри.

Çĕнĕ пурнăç тунă чухне монастырьсем тăрăх çÿресех килмест пулĕ çав халăхăн. Вĕсем ĕнтĕ хăйсен телейне çÿлтен кĕтсе лармаççĕ, хĕрÿллĕ, шанчă ĕçре кашни кун тупаççĕ.

Йĕри-тавра пăхатăн та: пур çĕрте те подъемнăй крансем кармашса тăраççĕ. Çĕкленет, юсанать, социализм çулĕпе çирĕппĕн утать Румыни Халăх Республики.

Бухарестра эпир тăватă кун пурăнтăмăр. Унта Национальнăй галлерейăра, çĕвĕ фабрикинче, Оперăпа балет театрĕнче пултăмăр, хулапа çывăх паллашрăмăр.

Ятарласах вырăс литератури кĕнекисен магазинне кайса куртăм. Вырăс кĕнекисене юратса вулани мана питĕ савăнтарчĕ. Кĕске вăхăтрах темиçе çын вырăсла кĕнекесем туянчĕç. Эпĕ кĕнекесен ячĕсене тишкеререх пăхма пуçларăм. Мана пĕр япала хавхалантарса ячĕ. Эпĕ П. Хусанкайăн «Поют дубравы» ятлă кĕнекине куртăм. Вара чăтаймарăм, ыйтрăм:

— Пĕтĕмпе миçе кĕнеке килчĕ?

— Нумайччĕ, ку юлашки,—ответлерĕ продавщица.

«Аслă вырăс чĕлхи урăх халăхсен литературине те тĕнчене саланать иккен!» шутларăм эпĕ. Вара тăван литературăшăн, тăван халăх çыравçисемшĕн питĕ савăнтăм. Мĕнле аслă та ирĕк çул уçса пачĕ пире совет самани!

Бухарест хули ем-ешĕл. Çÿлĕ-çÿлĕ йывăçсем мăнаçлăн лараççĕ. Сывлăш уçă, сывлама та çăмăл. Бульварсенче аллейăсенче тем тĕрлĕ чечексем çилпе йăвашшăн хумханса лараççĕ. Урамсем тап-таса.

Тăван çĕршыва таврăнас умĕн эпир ушкăнĕпех совет салтакĕсене чысласа лартнă памятник патне чĕрĕ чечек çыххисемпе кайрăмăр. Памятникĕ çÿлĕ, ун тăрринче—автомат тытнă совет салтакĕн скульптури. Халăхсене фашизм пусмăрĕнчен хăтарнă чăн-чăн мир хуралçи! Памятник умне эпир чечек çыххисем хутăмăр.

Эпĕ пĕр румынпа калаçса кайрăм.

— Ку памятнике эпир юратса пăхатпăр,—терĕ вăл.—Кунта яланах чĕрĕ чечек çыххисем выртаççĕ. Августăн 23-мĕшĕнче сирĕн кунта пулса курасчĕ. Эпир çак куна, Совет Çарĕ Румынине фашизм пусмăрĕнчен хăтарнă куна, пĕтĕм халăхпа уявлатпăр. Вăл пирĕн халăхăн пысăк уявĕ!

Пысăк уяв! Эпĕ çав кун румынсемпе пĕрле мар пулин те, чун-чĕрепе вĕсемпе çывăх. Пĕтĕм халăх вĕсен уявне чыслать, вĕсемпе пĕрле савăнать.

Эпир Румыни Халăх Республикипе сывпуллашрăмăр. Пире румынсем ăсатса ячĕç. Пĕр-пĕрине эпир тусем пек уйрăлтăмăр. Тусем çав эпир, çак туслăха никам та аркатаймĕ. Пĕр-пĕрне ăнланса, хисеплесе пурăнсан, туслăх ялан çирĕп пулать.

Г. ЕФИМОВ.

ÇАМРĂК НАТУРАЛИСТСЕМПЕ МЕХАНИЗАТОРСЕН III-мĕш СЛЕЧĔ

Çак кунсенче Шупашкарта республикăри çамрăк натуралистсемпе механизаторсен III-мĕш слечĕ пулса иртрĕ. Слета хуласемпе районсенчен 200 делегат ытла пухăннă. Вĕсенчен чылайăшĕ Шупашкарта ку таранччен пулман. Вĕсем савăнăçлă.

...Августăн 18-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотекине капăр тумланнă, хĕрлĕ галстуксем çыхнă арçын ачасемпе хĕрачасем — слет делегачĕсем пухăнма тытăнчĕç. Вĕсен аллисенче экспонатсем — хăйсем шкулти сăнавлă участокенче ÿстернĕ пахча çимĕç, улма-çырла, тырă кĕлтисем, кантăр, йĕтĕн, чумиза, кукуруза çыххисем.

Слета килнĕ юннатсем Шупашкарти 6-мĕш вăтам шкулти çамрăк натуралистсен кружокĕн экспоначĕсем умĕнче.

Библиотека вестибюлĕсенче республикăри çамрăк натуралистсемпе механизаторсен ĕçне лайăх сăнласа паракан выставка организациленĕ. Кунта чылай районсемпе хуласенчи юннатсен экспоначĕсене курма пулать.

Тĕлĕнмелли япаласем чăнах та нумай. Вестибюле кĕрсен сирĕн куçăрсене патвар ÿснĕ симĕс кукуруза курăнса кайать. Ăна чылай районсен экспоначĕсем хушшинче асăрхама пулать. Çак культура тăррисем маччана тĕкĕнсе тăрассĕ. Вĕсен çÿлĕшĕ виçĕ метр çурă е унтан та ытларах. Çакă, паллах, юннатсем, çамрăк мичуринецсем тăрăшса ĕçлемесĕр, вăй хумасăр пулман ĕнтĕ. Республикăри чылай шкулсенчи пионерсемпе шкул ачисем Иван Владимирович Мичурин сăмахĕсене: «Эпир çутçанталăкран ырлăх кĕтсе ларма пултараймастпăр. Çав ырлăха хамăр алла илесси вăл пирĕн задача», тенине тĕрĕс пурнăçласа пырассĕ. Çак сăмахсене пысăк саспаллисемпе хĕрлĕ хăмач çине çырса хунă.

Акă Шупашкарти 6-мĕш вăтам шкулти юннатсен экспоначĕсем. Слета килнĕ делегатсем вĕсене питĕ интересленсе, тĕлĕнсе пăхассĕ. Чылайăшĕ блокнотсем çине çыра-çыра илессĕ.

Иккĕмĕш ÿкерчĕк çинче эсир пĕр юннатка тĕлĕнсе пăхнине, темĕн çырса илнине куратăр. Ку Калерия Федорова — Сĕнтĕр районĕнчен килнĕ 7-мĕш класра вĕренекен хĕрача. Вăл виççĕмĕш çул ĕнтĕ юннатсен кружокĕнче тăрать. Кăçал тĕрлĕ чечексем ÿстерес тĕлĕшпе ăнăçлă опытсем туса ирттернĕ.

6-мĕш вăтам шкулти юннатсем кăçал опыт тумалли участокра (пĕтĕмпе пĕр гектара яхăн) 150 тĕслĕх пахча çимĕçпе тырпул лартса-акса ÿстерессĕ. Çак ĕçре вĕсене шкулти биолог Ганна Сидоровна Жирнова пысăк пулăшу парать. Çамрăк натуралистсем çак ĕçе виçĕ çул каялла тытăннă. Кăçал 200 тăваткал метр çĕр çинче 15 тĕслĕ помидор лартнă. Вĕсене юннатсен Пĕтĕм Российăри слетĕнче пулнă, вуннăмĕш класра вĕренекен Тамара Шишкина ертсе пыракан юннатсен кружокĕ пăхса ÿстерет. Помидорсем питĕ шултра ÿснĕ, кашни 800 грамран кая мар таять, вĕсем йăран çинчех пиççе çитессĕ.

— Кăçал кашни тĕпрен 8—10-шар килограмм томат илме ĕмĕтленетпĕр,— тет Тамара Шишкина.

Юннатсем кăçал 700 тĕп ир пулакан купăста лартса ÿстернĕ. Вĕсене пурне те торфпа çĕрĕк тăпри чÿлмекĕсенче çитĕнтернĕ. Февраль уйăхĕнчех пионерсемпе шкул ачисем çавăн йышши 3 пин чÿлмек хатĕрленĕ. Çак купăстана вĕсем пин тенкĕлĕх ытла сутнă та ĕнтĕ. Халĕ купăста иккĕмĕш хут ăнăçлă ÿсет, кашни тĕпре икшер пуç хăварнă, тепĕр уйăхран каллех пулса çитет.

Выставкăна «Стахановка» сортлă 7 килограмм таякан купăста пуçне тăратнă. Ку йышши купăстана 200 тĕп лартнă. Кăçал шкулти юннатсем сăнавлă ĕçсем туса сакăр тĕслĕ купăста лартнă.

Çамрăк натуралистсем лартса ÿстернĕ арбуз, дыня, китай хăярĕ, сахăр кăшманĕ, «Нантская» сортлă кишĕр слет участникĕсене нумайăшне тĕлĕнтерет.

Çÿлте асăннă çимĕçсемсĕр пуçне вĕсем çав пĕчĕк участок çинчех улма-çырла йывăççисем те лартса ÿстерессĕ. Кăçал çуркунне шкулти çамрăк мичуринецсем 200 тĕп улмуççи сыпса хăварнă. Вĕсен панулми çитĕнекен улмуççисем те сахах мар. Мĕн пурĕ 1.750 тĕп улма-çырла йывăççисем лартнă.

Юннатсем шкул участокĕнчен кашни çулах 3—4-шар пин тенкĕ тупăш илессĕ. Çак укçапа вĕсем çĕршывăн тĕрлĕ вырăнĕсене экскурсие кайса çÿрессĕ.

6-мĕш вăтам шкулти çамрăк натуралистсен пархатарлă ĕçĕ çинчен слетра Тамара Шишкина тухса каларĕ.

Выставкăна çавăн пекех Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкри вăтам шкулти, Шупашкарти 1-мĕшпе 3-мĕш вăтам шкулсенчи, Элĕк районĕнчи Таватри çичĕ çул вĕренмелли шкулти, Советски районĕнчи уйрăм шкулсенчи, Ишлей районĕнчи Хыркассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти, Канаш районĕнчи Ачакассинчи вăтам шкулти юннатсем, Çĕмĕрле районĕнчи юннатсен кружокĕсем интереслĕ экспонатсем тăратнă.

6-мĕш вăтам шкулти юннатсем пек тăрăшса ĕçлекен çамрăк натуралистсем ытти районсемпе хуласенчи шкулсенче те пур. Акă, сăмахран, Советски вăтам шкулĕнчи юннатсен ĕçнех илер. Усов юлташ ертсе пынипе вĕсем темиçе тĕслĕ виноград ÿстерессĕ. Выставкăна 4 сорт тăратнă. Пиçсе çитнĕ виноград сапакисем кирек камăн куçне те илĕртессĕ. Çак районти Асламасри çичĕ çул вĕренмелли шкулти çамрăк натуралистсем те пысăк тухăçлă кукуруза çитĕнтерес тĕлĕшпе опытсем тăвассĕ. Кăçал вĕсем хăйсен участокĕнче кукуруза 3,5 метр çÿлĕш ÿстернĕ. Çав вăхăтрах унти Ленин ячĕпе тăракан колхозра хăшпĕрисем: «пирĕн патăрта кукуруза пулмасть, акма та тăмасть», тессĕ. Шкулта юннатсен пархатарлă ĕçĕ кукуруза акассине хирĕç тăракансене вирлĕн пырса çапать, кукуруза ку колхозра та ăнăçлă ÿсме пултарнине çирĕплетсе парать. Агротехникăна тĕрĕс пăхăнса, тăрăшса ĕçлесен, унта та пысăк тухăçлă кукуруза ÿстерме пулать.

Калерия Федорова выставкăра. Вăл хăйсен шкулĕнчи опыт тумалли участокра лартса ÿстермен сортсемпе паллашать.

Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкри вăтам шкулти çамрăк мичуринецсем уйрăмах лайăх ĕçленине палăртмалла. Вĕсен участокĕнче темиçе тĕслĕ виноград пиççе çитет. Унсăр пуçне вĕсем улма-çырла йывăççисем нумай лартса ÿстерессĕ, çулçеренех йывăççисем нумай лартассĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ку шкулти çамрăк натуралистсен кружокĕ—Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ.

Республикăри çамрăк натуралистсемпе механизаторсен слечĕ виçĕ кун хушши ĕçлерĕ. Малтанхи ларура республикăри юннатсемпе механизаторсен ĕçри çитĕнĕвĕсем тата вĕсен малашнехи задачисем çинчен Чăваш АССР Çутĕç министрĕн заместителĕ Отачкин юлташ доклад туса пачĕ. Ялхуçалăх институтĕн механизаци кафедрин заведующийĕ, биологи наукисен докторĕ Ефейкин юлташ сăмахне çамрăк натуралистсем питĕ кăмăлласа итлерĕç. Вăл пионерсене шкул ачисене тырпул, пахча çимĕç ÿстерес ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунăшăн мухтарĕ, малашне çак ĕçе татах анлăрах сарма кирли çинчен каларĕ.

Ларăва ертсе пыракан ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ Егоров юлташ слета тăван республика представителĕсем — Мордва АССР делегачĕсем килни çинчен пĕлтерсен, залра ларакан пионерсемпе шкул ачисем тăвăллăн алă çупассĕ.

Саранск хулинчи 17-мĕш вăтам шкулти 10-мĕш класра вĕренекен çамрăк натуралист Виктор Егоров слет участникĕсене Мордва АССР-ĕнчи çамрăк натуралистсен ячĕпе хĕрÿллĕн саламларĕ.

Иккĕмĕш тата виççĕмĕш кунсенче юннатсен секцийĕсем ĕçлерĕç. Механизаторсен секцийĕ ялхуçалăх институтĕн машина паркĕнче пулчĕ. Унта ялхуçалăх институтĕн механизаци кафедрин заведующийĕ, техника наукисен кандидачĕ Тарчевский юлташ юннатсене ялхуçалăх машинисемпе тĕплĕн паллаштарчĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхса ÿстерекенсен секцийĕ Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхозра пулчĕ. Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕн заместителĕ Ĕлкин юлташ вĕсене выльăх-чĕрлĕх фермисенчи йывăр ĕçсене механизацилессине кăтартса çÿрерĕ тата ăнлантарса пачĕ.

Çамрăк садоводсемпе чечек ÿстерекенсем хулари коммуналлă хуçалăхăн чечексем ÿстерекен хуçалăхне кайса курчĕç. Агроном-цветовод Дорофеева юлташ юннатсене нумай çул ÿсекен чечексене мĕнле лартса çитĕнтермелли тата сад-пахчи ĕрчетмелли лайăх майсем çинчен каласа пачĕ.

Слет участникĕсем çавăн пекех ученăй агрономпа, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕпе Н. Никитин юлташпа, Чăваш писателĕсемпе — П. Хусанкай, А. Кăлкан, А. Талвир юлташсемпе тĕл пулчĕç. Çак тĕлпулусем уйрăмах интереслĕ иртрĕç.

Юлашки ларура çамрăк натуралистсемпе механизаторсем хăйсен малашнехи планĕсемпе ĕмĕчĕсем çинчен каласа пачĕç, республикăри юннатсен станцийĕ шкулсенчи çамрăк натуралистсемпе механизаторсен кружокĕсене ĕçре ытларах пулăшма кирлине, çав кружоксене пур шкулсенче те организацилесе пионерсемпе шкул ачисене нумайрах хутшăнтарма кирлине палăртрĕç.

Юннатсен чи лайăх ĕçлекен кружокĕсене тата уйрăм юннатсене хаклă парнесем пачĕç.

Пирĕн республикăри шкулсенче хальхи вăхăтра юннатсен 1.004 кружокĕ 21 пин çамрăка пĕрлештерсе тăрать. Иртнĕ çулта та çав кружоксенчи çамрăк натуралистсем шкул участокĕсенче пахча опытсем туса пысăк тухăçлă тырпул, пахча çимĕç ÿстерес тĕлĕшпе лайăх результатсем кăтартнă. Вĕсен ĕçне тивĕçлипе хакланă, 1955 çулта 256 çамрăк, 29 кружок тата тăхăр шкул Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă. Кăçал выставка участникĕсем пулма 583 кандидата çирĕплетме тăратнă.

Пионерсемпе шкул ачисем çамрăк натуралистсемпе механизаторсен кружокĕсенче ĕçлесе, пысăк тухăçлă ялхуçалăх культурисем пăхса ÿстерме вĕренессĕ.

Тамара Шишкина Мордва АССР-ĕнчен килнĕ хăнасене хăйсен шкулĕнчи çамрăк натуралистсен ĕçĕ çинчен каласа парать. (Сулахайран сылтăмалла): Тамара Шишкина, Мордва АССР-ĕнчен килнĕ делегаци руководителĕ М. Кузнецов, юннатсем — Ю. Ковшев, А. Засоркин, В. Егоров.

Г. АНДРЕЕВ.

Г. Зиньков фотоÿкерчĕкĕсем.

Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки Лондонра пухнă конференци

ЛОНДОН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Августăн 20-мĕшĕнче конференци ларăвĕнче Инди представителĕ Кришна Менон тухса каланă. Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйтăва мирлĕн, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставĕн принципĕсемпе килĕшÿллĕн татса пама майсем тупасси çак конференцин питех те кирлĕ задачи пулса тăрать, тенĕ вăл. Ăна татса панă чухне Суэц каналĕ Египет территорийĕн уйрăлми пайĕ пулса тăнине, çавăн пекех канал тăрăх 1888 çулхи конвенципе килĕшÿллĕн мĕнпур çĕршывсен судисем ирĕклĕ çÿремеллине асра тытса ĕçлемелле.

Çак принципсене шута илсе, Инди делегацийĕ ячĕпе Кришна Менон ыйтăва мирлĕн татса парасси çинчен калаçусем ирттерме никĕс вырăнне йышăнмалли сĕнÿ проекчĕ тăратнă. Проектра 1888 çулта Константинопольте тунă конвенцие сĕнĕрен пăхса тухма палăртнă, «унăн принципĕсене сĕнĕрен çирĕплетмелле, хальхи вăхăтра улшăнусем, çав шутра канал тăрăх çÿренĕшĕн илекен тÿлевсем тата канала тытса тăрас ĕç тĕлĕшпе постановленисем кĕртмелле», тенĕ.

Çак тĕллевпе, тенĕ малалла сĕнÿре, мĕнпур мерăсене пăхса тухмалла, çав шутра 1888 çулхи конвенци çине алă пуснă государствăсен тата каналпа усă куракан мĕнпур государствăсен представителĕсен конференцине пухас ыйтăва та татса памалла.

Инди делегацийĕ çавăн пекех каналпа усă куракан çĕршывсен интересĕсемпе «Суэц каналĕн Египет корпорацийĕн» интересĕсен хушшинчи çыхăнусем çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухма сĕннĕ, ку ĕçре харпăрлăх тĕлĕшпе тата канала тытса тăрас енĕпе Египета сиен кÿмелле мар, тенĕ. Инди делегацийĕ çавăн пекех каналпа усă куракансен консультаци органне туса хума сĕннĕ, ку вăл консультаци, каналпа тата çыхăну енĕпе тумалли ĕçсене пурнăçласа пыракан орган пулмалла, тенĕ. Египет правительстви, тенĕ сĕнÿре, «Суэц каналĕн Египет корпорацийĕн» докладне çулсерен Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине ярса памалла.

Кришна Менон çапла каланă: ку сĕнÿсене сÿтсе явнă чухне Инди делегацийĕ ыттисен шухăшĕсене шута илме хатĕр пулĕ, анчах та кунта Суэц каналĕ Египет аллинче пулмаллине, Суэц каналĕн компанине национализациленине ялан асра тытмалла.

Унтан США делегацийĕн пуçлăхĕ Д. Даллес тухса каланă. Вăл халĕ ĕнтĕ мĕнпур делегацисем хăйсен позицийĕсем çинчен каласа панине, малалла мĕн тăвасси çинчен ыйту тухса тăнине палăртнă. Вăл конференци Египетшăн обязательно пулса тăракан мĕнле те пулин решенисем йышăнма пултарайманнине, конференципе делегацисен ытларахăшĕ ырлакан шухăша вĕсен сахалтарахăшĕ обязательнах йышăнмаллă маррине аса илтернĕ. Унтан Даллес хăйĕн сĕнĕвĕсен проектне тăратнă. Проектра канала тытса тăрас ĕçе тĕнчери çĕршывсен органĕ аллине памалла тума палăртнă.

Америка проектĕнче «Египет суверенитетне хисеплени» çинчен каланă, анчах чăннипе вара канала Египет аллинчен туртса илес тĕллев лартнă. Проектăн виççĕмĕш пунктĕнче «канала тытса тăрас, аслăлатас тĕлĕшпе» тумалли ĕçсемшĕн ответлăха ют çĕршыв государствисемпе Египет представителĕсенчен тăракан правлени аллине пама палăртнă. Çавăн пекех проектра «Египета тивĕçлĕ тÿпе» пирки тата «Суэц каналĕн компанине тивĕçлине тÿлес» тĕлĕшпе мĕнпур тавлашусене татса пама арбитраж комиссийĕ туса хума палăртассĕ.

Малалла Д. Даллес çапла каланă: США делегацийĕн шучĕпе, унăн сĕнĕвĕсене Египета ярса памалла, вĕсене Египет йышăнсан, США сĕнĕвĕсемпе килĕшекен мĕнпур çĕршывсем тата Египет хушшинче договор тума пулать.

Даллес каласа пĕтернĕ хыççăн Пакистан представителĕ конференци ларăвне ыранхи куна хăварма сĕннĕ, конференци участникĕсен проектсемпе тĕплĕн паллашма вăхăт пултăр, тенĕ. Çак сĕнĕве конференци ырланă.

Лондон хаçачĕсем конференци çинчен мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Суэц каналĕ пирки пухăннă конференцин ĕнерхи ларăвĕ çинчен Англири хаçатсем паян нимĕнрен те ытларах çыраççĕ.

Лондонри конференци, тесе çырать «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат, «çул юппи патне пырса çитрĕ», ĕнерхи ларура пĕр-пĕрне хирĕçле икĕ план сĕнчĕç. Кунта Америкăпа Инди планĕсем çинчен сăмах пырать.

Комментаторсем çак икĕ плана пĕр-пĕринпе танлаштарса пăхассĕ. Чылай хаçатсем çакна палăртассĕ: Дж. Даллес хăйĕн сĕнĕвĕсене конференципе пăхса тухма тăратас умĕн малтанхи варианта хăшпĕр улшăнусем кĕртнĕ. Çакна ăна, тĕпрен илсен, «Суэц каналĕн тĕнчери çĕршывсен управленийĕ» тесе каланине «Суэц каналĕн правленийĕ» текен сăмахсемпе улăштарас шутпа тунă. «Дейли скетч» хаçатра каланă тăрăх, Даллес тÿрлетĕвĕсен тĕп тĕллевĕ шăпах çавăн пек ĕнтĕ.

Анчах та, нумай обозревательсен шучĕпе, çакă вăл Америка планĕн тĕп ыйту тĕлĕшĕнчи тĕллевне улăштарман. Кунта Суэц каналне кам тытса тăмалли çинчен сăмах пырать. Шăпах çак ыйту тĕлĕшпе ĕнтĕ маларах асăннă икĕ план хушшинче пысăк уйрăмлăхсем пур. Америка планĕ, тесе çырать «Дейли скетч» хаçат, канала «интернационализацилеме» требовани лартать, Инди планĕ вара канала Египет аллинче хăварма палăртать, «Ньюс кроникл» хаçат та çавăн майлă çырать. Унăн корреспонденчĕ В. Форрест «Египет çыннисем канала хăйсен аллинче тытса тăмалла», тесе Инди пĕлтерчĕ» ятлă статьяра çапла çырать:

«Хальхи вăхăтра конференци икĕ план умĕнче—канала Египет аллинче хăвармалли планпа «интернационализацилемелли» план умĕнче тăрать».

Çапла ĕнтĕ, тесе çырать «Дейли геральд» хаçат обозревателĕ Юэр, канала кам тытса тăмалли çинчен тăракан ыйту тĕлĕшпе икĕ план хушшинчи уйрăмлăх питĕ пысăк. США канала контроллесе тăрас ĕçе кăна мар, ăна тытса тăрас ĕçе те тĕнчери çĕршывсен органĕ аллине пама сĕнет, Инди вара канала тытса тăрас ĕç пĕтĕмпех Египет аллинче пулмалла тесе шутлать. Египет Америка планне йышăнма май çук тесе шутлĕ, тессĕ.

«Дейли миррор» хаçат Инди сĕнĕвĕ пирки уççăнах пăшăрханса çырать, мĕншĕн тесен çак сĕнÿ канала тĕнчери çĕршывсен тытса тăмалли йĕрке тăвас шухăша хирĕç пырать. Хаçат кăтартса панă тăрăх, Инди сĕнĕвĕсем Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйтăва хĕвеланăçĕнчи державăсен сĕнĕвĕсен никĕсĕ çинче татса парас шанчăка пĕтерессĕ.

«Таймс» хаçат умстатьинче çапла каланă: Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки пухăннă конференци Даллес сĕнĕвĕсене йышăннипе пĕçленĕ тесе шутлани тĕрĕс пулмарĕ.

К. Менон ирттернĕ пресс-конференци

ЛОНДОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирттернĕ пресс-конференцире Инди делегацийĕн пуçлăхĕ К. Менон çапла каланă: Инди делегацийĕ шучĕпе, ĕнер Даллес панă сĕнÿсем Египет правительствишĕн юрăхлă мар. Даллес планĕ фактсене шута илмест. Египет правительстви Суэц каналĕн компанине национализацилерĕ, Даллес планĕ вара ăна интернационализацилеме сĕнет. Тĕнчери çĕршывсен мĕнле те пулин килĕшĕвне пула Египет правительстви хăйĕн çĕршывĕн никама пăхăнманлăхне хÿтĕлеме пăрахас çук, тенĕ Менон.

Насер президентăн заявленийĕ

КАИР, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Арабсен информаци агентстви руководителĕпе калаçнă чухне Насер президент çакна палăртнă: Лондонри конференцире Даллес сĕннĕ пек Суэц каналне тĕнчери çĕршывсем тĕрĕслесе тăрас йĕркепе Египет нимĕнле условисенче те килĕшес çук. Ку вăл пирĕн суверенитетна тивĕç çине алă çĕклени пулĕччĕ. Канал вăл Египет территорийĕн пайĕ пулса тăрать. Компанине национализациленĕ хăрушсăрлăх ыйтăвне пырса тивмест. Суэц каналĕпе усă курас тĕлĕшпе çак каналăн Египет администрацине канашсем пама консультаци комитечĕ туса хурас пулсан, çак ĕç çине мĕнле пăхнă пулăттăр эсир? тесе ыйтсан, президент çапла ответленĕ: «Ку ыйтăва сÿтсе явма пулĕччĕ».

Эпĕ, тенĕ вăл, Лондонри конференци мĕнле решени йышăнассине, унăн сĕнĕвĕсене Египет йышăнмасан конференци мĕн тăвассине пĕлместĕп. Конференци хăйĕн решенийĕсене Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ ырлатăр тесе тăрăшать пулсан, тенĕ Насер, «Египет нумай калама пултарĕччĕ». Сăмахран, ООН Уставĕ çак организаци членĕнче тăракан государствăсен суверенлă прависене пырса тĕкĕнме ирĕк памасть.

Египета вăйпа юнаса хăратма хăтланнине Насер сивленĕ, «Египет хăйĕн суверенитетĕпе тивĕçне пĕтĕм вăйпа хÿтĕлĕ», тенĕ.

Насер тата çакна палăртнă: хĕвеланăçĕнчи державăсемпе Египет пĕр-пĕрне шанми пулнăшăн хĕвеланăçĕнчи державăсем хăйсем айăплă.

Юлашкинчен президент арабсен государствисене вĕсем Египета ырă сунса пулăшнăшăн тав тунă. Лондонри конференцие пухнине хирĕç протестлесе тунă забастовкăсем, тенĕ вăл, Египета арабсен пĕтĕм тĕнчи пулăшнине уççăн кăтартса пачĕ.

Сирипе Иордани хушшинчи калаçусем

ДАМАСК, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Сирипе Иорданин государство деятелĕсем хушшинчи калаçусем вĕçленнĕ.

Калаçусем хыççăн пичетленĕ коммюникере çапла каланă: калаçусем вăхăтĕнче арабсене пырса тивекен пĕтĕмĕшле ыйтусене сÿтсе явнă, пăхса тухнă ыйтусем тăрăх пĕр-пĕрне пĕтĕмпех ăнланнă.

«Ан-Нур» хаçат корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, калаçусем вăхăтĕнче Иордани çарне Сири, Египет тата Саудовски Аравия уйăрса парса пулăшасси çинчен килĕшÿ тунă.

Вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн

ВЛКСМ Шăхасан райкомĕнче çамрăксене уйрăмах йышлăн курма пулать. Вĕсен пурин те пичĕсем хаваслăхпа йăлкăшса тăраççĕ. Пĕрин хыççăн тепри васкасах хăйсем ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ Донбасса ĕçлеме кайма чĕнсе каланине пысăк хаваслăхпа йышăнни, хăйсем шахтерсем пулма ĕмĕтленни çинчен калаçса параççĕ.

Акă, Иван Леонтьевпа Юлий Николаев комсомолецсем. Вĕсем иккĕшĕ те кăçал Имашри вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Ваньăпа Юрий Донбасри çĕр кăмрăк шахтисене ĕçлеме яма ыйтса заявленисем панă. Вĕсем çапла çыраççĕ:

— Комсомол чĕнсе калани пире чĕререн хумхантарчĕ, çĕршыва çĕр кăмрăкĕ çакăр пекех кирли пире паллă ĕнтĕ. Çакна совет шкулĕнче вуннă çул хушши вĕреннĕ çамрăксен пуринчен ытларах ăнланса илме кирлине асра тытса, пире шахтăсене ĕçлеме яма ыйтатпăр.

Донбаса каяс текен комсомолецсемпе çамрăксем Сталин ячĕпе, Жданов ячĕпе, Куйбышев ячĕпе тăракан, «Победа», «Красный Октябрь» тата ытти колхозсенче те чылай. Районти пур çамрăксене те комсомол чĕнĕвĕ чĕререн хумхантарать.

Юлашки икĕ кун хушшинче 39 комсомолец заявлени панă. Комсомолецсемпе çамрăксем партин XX съезчĕ сĕннĕ пилĕкçуллăхра промышленноçа аталантарас тĕлĕшпе ĕçсыннисем умне кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама активлăн хутшăнма хатĕр пулни çинчен калаççĕ.

Г. ВАСИЛЬЕВ.

ВЛКСМ Шăхасан райкомĕн секретарĕ.

Усăллă лекци

«Чăваштрой» трестăн 49 хваттерлă çурт тăракан участокĕнче «Ĕç дисциплинине çирĕплетесси çинчен» лекци пулчĕ. Лекцие 4-мĕш участокри халăх судьи Б. Федоров юлташ вуласа пачĕ.

Рабочисем лекцие пысăк тимлĕхпе итлерĕç, лектора ыйтусем нумай пачĕç. Ун хыççăн тухса калакансем ĕç дисциплинине пăсакансене критиклерĕç, тухăçлă ĕçлеме сĕнчĕç.

М. ФЕДОРОВ,

трестри рабочи.

Спорт хыпарĕсем

Республикăри ялсенчи велосипедистсен ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Ăмăртăва 57 çын хутшăнчĕ.

Командăсем хушшинче пĕрремĕш вырăна Чкаловски районĕнчи велосипедистсем, иккĕмĕш вырăна—Хĕрлĕ Чутай, виççĕмĕш вырăна—Шăхасан спортсменĕсем тухрĕç.

Шоссе тăрăх 75 километра велосипедпа чупса, Шăхасан районĕнчи çамрăк спортсмен В. Плешков, 50 километра чупса — В. Михайлов (Чкаловски районĕ), 25 километра чупса—В. Атнашкина, 15 километра чупса—Клара Муравьева (Хĕрлĕ Чутай районĕ) пĕрремĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Республика спортсменĕсем халĕ Дон çинчи Ростов хулине тухса кайрĕç. Унта велосипед спорчĕ енĕпе Пĕтĕм Российăри ăмăрту пулать.

Г. ХАЙКИН.

Шыва ишес енĕпе республикăра мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртура, 100 метра ишсе А. Петрова (Шупашкар хули) мала тухрĕ. Унăн вăхăчĕ—1 минут та 39 секунд.

Брасс текен майпа 100 метра ишсе Г. Петрова («Буревестник» обществи) пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Арçынсем хушшинче 100 метра ишсе педагогика институтĕн студенчĕ Н. Харитонов республика чемпионĕн ятне илчĕ. Унăн вăхăчĕ—1 минут та 10,4 секунд. Ку результат иккĕмĕш разряд норминчен лайăхрах.

В. ТАЛДЫКИН.

«Спартак» спорт обществинче кимĕпе ишес енĕпе ăмăрту ирттернĕ. Арçынсен командисем енĕпе Шупашкарти «Кооператор» артель, хĕрарăмсен командисем енĕпе—Шупашкарти «Вперед» артель командисем мала тухнă.

Пĕчченшерĕн 1.000 метра кимĕпе ишсе Г. Агеев (Шупашкар хули), иккĕн ишсе В. Добрынин, Г. Кузьмин (Шупашкар хули) мала тухнă. Хĕрарăмсенчен 500 метра ишсе Г. Родионова (Сĕнтĕрвăрри) пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Байдаркăпа 1.000 метра ишсе Ю. Коротков (Шупашкар хули) мала тухнă. Хĕрарăмсенчен 500 метра ишсе Р. Шенка (Шупашкар хули) пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Ăмăртăва хутшăннă 18 çын виççĕмĕш разряд нормине тултарнă.

Ю. КОРКИН.

РАДИОПА ПАРАКАН ПЕРЕДАЧАСЕМ

Вырăнти вăхăтпа

Августăн 23-мĕшĕ

18.50—çамрăксем валли хатĕрленĕ передача.—19.10—«Румыни халăхĕ социализм çулĕ çинче» ятлă калаçу. 19.25—Румыни музыкин концерчĕ.

Августăн 24-мĕшĕ

18.50—«Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тĕнче чиркÿ тĕлĕшпе мĕнле политика тытаççĕ» ятлă калаçу. 19.05 — кĕçĕн çулхи ачасен передачи. А. Лазарева çырнă «Ашшĕсен парни» ятлă калав.

Августăн 25-мĕшĕ

18.20—«Государство пенсийĕсем çинчен калакан çĕнĕ Закона пурнăçа кĕртме хатĕрленесси» ятлă калаçу. 18.40—тĕнчери лару-тăру çинчен статья. 18.55—Чăваш композиторĕ С. М. Максимов творчестви çинчен концерт-калаçу.

Августăн 26-мĕшĕ

17.00—Андрей Макаенок çырнă «Каçарăр, тархасшăн» комеди тăрăх йĕркеленĕ радиомонтаж.

Редактор М. Н. ЯКИМОВ.

Кино

«РОДИНА». Августăн 23-мĕшĕнче кăнтăрлахи сеанссенче илемлĕ фильм «За власть Советов», каçхи сеанссенче кинокомеди «Дерзкая девчонка».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-09, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—13-37, литературăпа искусство пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 33204. Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2419. Тираж 29.600 экз.